24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 ЯНВАРЬ 27 ЫТЛАРИКУН 22 (6047) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем 1942 çулти январĕн 16-мĕшпе 25-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешсе, 1942 çулти январĕн 16-мĕшпе 25-мĕш хушшинче çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксем—69, орудисем—268, миномётсем—49, пулеметсем—384, автоматсем—142, винтовкăсем—1.842, снарядсем—107.223 тата снарядсем хунă 189 ещĕк, минăсем—3.734 штука тата минăсем хунă 41 ещĕк, патронсем—1.950.780 штука тата патронсем хунă 62 ещĕк, гранатăсем—3.721 штука тата гранатăсем хунă 7 ещĕк, авиабомбăсем—20.000 штука, çутатмалли патронсем—1.100 штука тата уйрăмăн 26 ещĕк çутатмалли патронсем, тар—109 килограмм тата уйрăмăн 104 ещĕк тар, бронемашинăсем—5, автомашинăсем—1979, мотоциклсем—196, велосипедсем—614, бензин цистернисем—6, тракторсемпе тягачсем—60, прицепсем—36, лавсем—312, лашасем—349, радиостанцисем—10, снаряд ещĕкĕсем—24, йĕнерсем—97, бензин пичкисем—3.114, тĕрлĕ хут—140 тонна, телеграф лентисем—80.000 штука, целлулоид—157 тонна, канифоль—30 тонна, артиллери снарячĕсен пăхăр гильзисем—50 вагон, снарядсем хумалли ещĕксем—150 вагон, йĕплĕ пралук—25 вагон, танксен чаçĕсене тиенĕ 2 платформа, автомашинăсен чаçĕсене тиенĕ пĕр платформа, завод оборудованине тиенĕ 13 платформа тата пĕр вагон, паровозсем—13, вагонсемпе платформăсем—287, юр тасатмалли машинăсем—2, велосипедсене, мотоциклсемпе хими баллонĕсене тиенĕ 4 вагон, тупăсене тата ыттисене лартмалли йĕлтĕрсем пĕр вагон тытса илнĕ.

Январĕн 16-мĕшпе 25-мĕш хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 12.000 çын ытла вилнĕ. Çак вăхăт хушшинчех Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем халăх пурăнакан 894 пункта нимĕç оккупанчĕсенчен хăтарса ирĕке кăларнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Çамрăк комсомолецсемпе куллен ĕçлемелле

Ленинла-Сталинла комсомол — çамрăксен малта пыракан отрячĕ. Çавăнпа кашни çамрăк патриот комсомол ретĕнче пулма ĕмĕтленет.

Республикăри темиçе çĕр çамрăксем отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче комсомола кĕчĕç. Канашри вагонсем юсакан заводри А. Анориндпа Н. Елохин сверловщиксем тата слесарь-клепальщик И. Яковлев юлташсем хăйсен пултарулăхне стахановла ĕçре кăтартрĕç, нумай пулмасть вĕсене Ленинла—Сталинла комсомол ретне илнĕ.

Елчĕк районĕнче те малта пыракан çамрăксем комсомола кĕреççĕ. Нумай пулмасть «Красная знамя» колхозри примерлă çамрăксем — В. Шашковпа Н. Кузьмин юлташсем комсомол ретне кĕнĕ.

Анчах хăшпĕр районсенчи пуçламĕш организацисенче комсомол йышне ӳстерес тĕлĕшпе ĕç начартарах тăратьха. ВЛКСМ Тăвай райкомĕ вăрçă пуçланнăранпа комсомол ретне мĕнпурĕ те 19 çамрăка кăна илнĕ. 1941 çулта районри 28 пуçламĕш организацире пĕр çынна та комсомола илмен. Çавăн пекех Шăхасан районĕнчи 45 организацире те пĕр çĕнĕ член те хутшăнман.

Пирĕн çамрăксен комсомол ретне кĕрес кăмăлĕ пысăк. Кашниех, хăйне ĕçре кăтартса, комсомол ретне кĕме тивĕç илессишĕн тăрăшать. Анчах комсомолăн хăшпĕр организацийĕсем малта пыракан çамрăксен шухăш-кăмăлĕсене шута илмеççĕ, вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе куллен ĕçлемеççĕ. Çавăнпа унта вара комсомолецсен йышĕ çителĕксĕр ӳссе пырать.

Тепĕр чухне комсомол йышне ӳстерессине пуçламĕш организацисем хăйсем те чăрмантарса тăраççĕ. Çамрăксен комсомола илме ыйтса панă заявленийĕсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ. Комсомолăн Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Семенов юлташ) Кудрявцева юлташăн заявленине 2 уйăх хушши тытса усранă. Крупская ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш организацин секретарĕн Сметанина юлташăн айăпĕпе Николаева юлташ комсомола илме ыйтса панă заявлени 3 уйăх хушши выртнă, ăна никам та, ниçта та пăхса тухман.

Заявленисем ВЛКСМ райкомĕсене çитсен те чылай вăхăт выртаççĕ. Тăвай райкомĕ 6 заявлени нумайранпа ĕнтĕ пăхса тухмасăр усрать. Ку фактсем хăшпĕр организацисенче комсомолăн шалти ĕçĕ кирлĕ вырăнта тăманни çинчен калаççĕ. Ун пек бюрократла йĕркесем комсомол ĕçĕнче пулмалла мар.

Комсомола пуринчен ытла 16—18 çулти çамрăксем кĕреççĕ. Хăйĕн пурнăçне комсомолпа çыхăнтарни кашни çамрăкшăн пысăк событи пулса тăрать. Комсомола илнĕ кунран пуçласах çамрăка обществăллă пурнăçпа паллаштармалла. Ăна коммунистла воспитани парас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнмалла. Çамрăк комсомолеца обществăллă ĕçе явăçтармалла, дисциплинăллă пулма хăнăхтармалла. Дисциплинăллă пулассин член укçине вăхăтра тӳленинчен, пухусене йĕркеллĕ çӳренинчен, хушнă ĕçсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пынинчен пуçланать. Анчах час-часах комсомол организацийĕсенчи руководительсем çамрăк комсомолецсене çак требованисене пурнăçлама хăнăхтарас ĕçе тумаççĕ. Çамрăка комсомола илнĕ — ĕçĕ те пĕтнĕ, тесе шутлаççĕ пулас. Пуçламĕш организацисен секретарĕсемпе ВЛКСМ райкомĕсен комсомола илнĕ çамрăка вăхăтра билет парса обществăллă ĕçе явăçтарас ыйтăва пысăк хак памалла. Анчах ку тĕлĕшпе те пирĕн ĕçре çитменлĕхсем тĕл пулаççĕ-ха. Билетне хатĕрлесе хурайман, çамрăк комсомолец фотокарточка илсе килмен е ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ çук пирки тата ытти тĕрлĕ «сăлтавсем» пирки хăшпĕр районсенче вуншар комсомолец билетсене вăхăтра илеймеççĕ.

Тепĕр чухне тата çамрăка комсомола илеççĕ, билетне те параççĕ, кайран ун çинчен пачах манса каяççĕ. Темиçе уйăх хушши пухусем пулмаççĕ, член укçи пухмаççĕ, çамрăка ĕçе явăçтармаççĕ. Çамрăк вара хăй пĕлнĕ пек пурăнма тытăнать. Дисциплинăна малтанхи кунсенчех çирĕплетес, уставра ыйтнине пурнăçлас вырăнне, йăлтах урăхла пулса тухать. Çамрăк комсомолец 8—10 уйăх е çулталăк хушши член укçи тӳлемест, пурăнсан-пурăнсан билечĕ те çухалать. Çитес пухура вара ăна комсомолтан кăлараççĕ. Сăмахран, комсомолăн Тушкиль ялĕнчи (Тăвай р.) пуçламĕш организацире 1941 çулта февраль уйăхĕнче Данилов юлташа комсомол ретне илнĕ. Март уйăхĕнче вăл билетне çухатнă. Анчах юлашки кунсемччен ун çинчен ниçта та сӳтсе-явман. Ăна пухусене чĕнмен, комсомолтан тухса ӳкнĕ тесе шутланă. Çав организацирех Н. Федоровăпа Илларионова комсомолкăсем 1940 çултанпа член укçисене тӳлемен, пухусене çӳремеççĕ. Пуçламĕш организацире ниепле решенисĕрех вĕсене комсомолецсен шутĕнчен кăларса пăрахнă, ВЛКСМ райкомĕ ун çинчен нимĕн те пĕлмест. Кун пек примерсене ытти районсенче те тĕлпулма пулать. Комсомолăн Сĕнтĕр районĕнчи «Родник» колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацинче те пуху пулманни тăватă уйăх çитнĕ ĕнтĕ.

Паллах, çавăн пек организацисен авторитет сахалрах пулать, комсомол йышĕ те начар ӳсет.

ВЛКСМ пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсем, райкомра ĕçлекенсем комсомолăн шалти ĕçне çӳлĕ вырăна лартассин çине тимлĕн çавăрăнса пăхма тивĕç. Пухусем иртересси, член укçи пухасси вăхăтра пулса пытăр. Вăл комсомолецсен дисциплинине хăпартать. Дисциплина пулсан, производствăра та ĕç ăнăçлăрах каять. Комсомол организацийĕн авторитечĕ ӳсет. Союзра тăман çамрăксем комсомолецсемпе çывăхрах çыхăнса тăма пуçлаççĕ, вĕсенчен пример илме тăрăшасçĕ. Çав вăхăтра çамрăксене ВЛКСМ программипе тата уставĕпе паллаштармалла, обществăллă ĕçсене хутшăнтармалла. Çапла туни çамрăксене комсомолпа паллаштарма тата хамăрăн рете чи лайăххисене суйласа илме май парать.

Комсомола тин çеç кĕнĕ çамрăксем хăйсене (хăюсăр тыткалаççĕ. Çавăнпа çамрăк комсомолецсене тĕрĕс воспитани парас тĕлĕшпе уйрăмăнах тăрăшса ĕçлемелле. Вĕсене обществăллă ĕçе хутшăнтарса поручснисем памалла. Малтанхи кунсенчех комсомол ретĕнчи дисциплинăна хăнăхтармалла. Тепĕр чухне хăшпĕр руководительсем, «вĕсен опыт çук» тесе, çамрăк комсомолецсене поручснисем памасăр тăраççĕ. Ку тĕрĕс мар. Пĕр комсомолец та поручнисĕр пулмалла мар. Анчах ку кирек кама та пур ĕçе те пама юранине пĕлтермест. Поручснисене комсомолецăн пултарулăхне шута илсе памалла. Çав вăхăтрах панă поручснисене тĕрĕслессине те манма юрамасть.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 24-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малалла куçса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Январĕн 23-мĕшĕнче нимĕçсенне 11 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

Январĕн 24-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсенне 3 самолет персе антарнă.

* * *

Январĕн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен пехотăпа грузсем турттарса пыракан 360 автомашинине, 13 орудине прислугисемпе пĕрле, боеприпассем тиенĕ 90 лавне яхăн пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 49 вагона çунтарса янă, боеприпассен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, противник пехотин пĕр полкне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противника хирĕç виçĕ кун хушши çапăçса, нимĕçсенне 76 автомашина, 25 мотоцикл, 17 трактор, 20 пулемет, бензин тултарнă 150 пичке, вуншар ещĕк снаряд тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Январĕн 23-мĕшĕнче кăна пирĕн боецсем халăх пурăнакан 20 пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă.

Тепĕр участокра пирĕн кавалери чаçĕ халăх пурăнакан П. пунктне йышăнса илнĕ, нимĕçсенне 26 пулемет, 2 оруди, 7 миномет, 125 винтовка, 26 пин патрон тата гитлеровецсем вырăнти халăха çаратса пухнă япаласене 46 лав тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр часть, тăшман çине кĕтмен çĕртен пырса çапса, халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ, ним йĕркесĕр каялла чакакан противник виçĕ оруди, 7 пулемет, виçĕ миномет, боеприпассем тиенĕ 12 автомашина, радиостанци тата ытти çар пурлăхĕсем нумай пăрахса хăварнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 260 вилли выртса юлнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче кĕрешекен пирĕн пĕр чаçри танкистсем виçĕ кун хушшинче нимĕçсен çĕрпе йывăçран тунă 4 огневой точкине, 7 блиндажне пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн салтакĕсене 200 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Танк командирĕ Никольский тата водитель Васильев уйрăмăнах пысăк паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă. Вĕсем нимĕçсене орудипе пулеметран тӳрĕ тĕллесе пере-пере вĕлернĕ, боеприпассем пĕтсе çитсен, танкистсем люка уçнă та револьверсенчен персе татах 10 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Гитлеровецсем Германири тата оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхран арестлессипе, персе пăрахассипе хăратса ирĕксĕрлесех ăшă тумтирсем туртса илеççĕ пулин те, нимĕç çарĕ валли ăшă тумтирсем пухас кампани намăсла путланса ларнă. Нимĕçсен командованийĕн хăшпĕр приказĕсенче çакăн çинчен пĕр пытармасăрах йышăнса каланисем тĕл пулаççĕ. Сăмахран, генеральнăй штабăн оперативнăй отделĕн ятарласа кăларнă 43761/41-мĕш номерлĕ приказĕ çумне хушса çырнинче çапла каланă: «Тăван çĕршывран пулăшу кĕтме çук, çавăнпа та тытса илнĕ облаçсенчи халăхран ирĕксĕрлесех туртса илсе те пулин ăшă тумтирсем тупмалла. Чи малтанах çăмран çыхнă тата сăран перчаткăсене, пальтосене, жилетсемпе шарфсене, ваткă хурса çĕлетнĕ пиншаксемпе брюкисене, сăран атăсемпе çăматăсене тата портянкăсене пуçтарса илмелле».

Гитлерла босяксене тумлантарма вăрласа пухнă япаласем çапах та çитес суккинчен пиклелсе, нимĕçсен командованийĕ ăшă тумтирсене улăштармалли урăх япаласене массăллăн тăвас ĕçе организацилеме хушать. Асăннă приказра кун пирки çапла каланă: «Финсен çарĕнче сивĕрен сыхланма гофрированнăй хутран тунă жилеткăсемпе анлăн усă кураççĕ. Чаçсене хăйсен средствисемпех çавăн пек япаласем тума хушас. Жилетсене гофрированнăй е чĕркемелли хутран, вĕсем çук пулсан — хаçат хутĕнченех тума пулать», тенĕ.

Çапла ĕнтĕ, çăматă, кĕрĕк, çĕлĕк вырăнне—хаçат хучĕ! Пулă çук пулсан рак та пулах, тенĕ евĕрлех ĕнтĕ ку!

* * *

Нимĕçсен вилнĕ обер-ефрейторĕ Гальштих çумĕнче вăл хăйĕн тăванĕсем патне яма ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Унта вăл çапла çырнă: «Кунта пирĕн халĕ пурте йĕркеллех мар, йăлтах пăтрашса кайрĕ. Вырăссем пĕрмаях наступлени тăваççĕ. Вĕсем пирĕн позицисене татса кĕчĕç, эпир каялла чакатпăр. Пирĕн иккĕмĕш батарея пĕтĕмпе тенĕ пекех стройран тухрĕ. Кунта мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех çырса кăтартма та пултараймастăп»,—тенĕ.

Январĕн 25-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Устянцев юлташăн подразделенийĕ (Хĕвеланăç фрончĕ), противникăн тылне кĕрсе кайса, хаяр çапăçу хыççăн К. ялне йышăнса илнĕ. Пирĕн разведчиксем юнашар ялтан тăшманăн чакса пыракан колонни çывхарса килни çинчен систернĕ. Устянцев юлташ засада тунă та нимĕçсем çине вĕсем 30—40 метра çити çывхарсан çеç пеме тытăнма хушнă. Пирĕн боецсем тăшмана çавăн пек кĕтмен çĕртен пырса çапса, унăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинче тăшманăн çĕрпе йывăçран тунă 5 огневой точкине, 6 блиндажне, 7 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă тата икĕ оруди, 15 пулемет, миномет, танксене хирĕç пемелли 5 пăшал тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çын пĕтнĕ.

* * *

Новое Борисово ялĕшĕн пынă çапăçура кĕçĕн лейтенант Анатолий Котляров ертсе пыракан танк, пехотăн десанчĕпе пĕрле пулса, противник йышăнса тăракан вырăна хăвăрт пырса кĕнĕ те противникăн каялла чакмалли çулĕсене татса илнĕ. Десантри боецсемпе пĕрле пулса, Котляров юлташăн танк экипажĕ çак çапăçура тăшманăн 4 минометне, темиçе пулеметне пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 300 салтакне çити пере-пере вĕлернĕ.

* * *

Кĕçĕн лейтенант Титов юлташăн подразделенийĕнчи автоматчиксен взвочĕ юлашки икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕç пулемечĕсен 14 расчетне пĕтерсе тăкса, пулеметсене пурне те тытса илнĕ, пулеметсем пурте юсавлă.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен Ч. юлташ ертсе пыракан йĕлтĕрçĕ-партизансен отрячĕ çулăн чылай участокĕсене минăсем хурса тухнă. Çав минăсем çине пырса кĕрсе, виçĕ кун хушшинче нимĕçсен 2 танкĕ тата горючи турттарса пыракан 3 грузовой автомашини сирпĕнсе кайнă.

Çав отрядри партизансен групти чугунçул линине тата тиевлĕ виçĕ платформăна туртса пыракан мотодрезинăна сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсен отрядне хирĕç çапăçнă чухне партизансем гитлерла салтаксене темиçе вуншар çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕçсен 141-мĕш горно-егерски полкĕнчи 6-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ фельдфебель Иозеф Вальх çапла каласа панă: «Эпир питĕ хытă шăнатпăр. Тăм илнĕ салтаксен хисепĕ татти-сыпписĕрех ӳссе пырать. Дисциплина палăрмаллах япăхрĕ. Нумаях пулмасть пирĕн патăрта поста кайма килĕшменшĕн пĕр салтака персе вĕлерчĕç. Салтаксен шухăш-кăмăлĕ питĕ япăх».

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Карл Вернар патне нумаях пулмасть унăн амăшĕ çапла çырса янă: «Пире малашне мĕн пуласси çинчен шухăшлама çавтерех йывăр, ун çинчен шухăшличчен вилни лайăхрах. Аçу та çавнашкалах йывăр шухăшпа пурăнать. Сире пурне те вĕлерсе пĕтересссĕн, Германин пĕр салтак те юлмасассăн çеç çак вăрçă чарăнать пулĕ ĕнтĕ».

* * *

Украинăра пурăнакан çынсем, фронт линийĕ урлă каçса килнĕскерсем, гитлеровецсен Киеври çавтери тискер ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ. Хулара выçлăх тăрать. Украинăн унччен чечекленнĕ столицинчен нимĕçсем халĕ мирлĕ халăха асаплантармалли тĕрме туса хунă, нимĕçсем унта кулленех çĕршер çынна пере-пере вĕлереççĕ. Нумаях пулмасть, провокаци тăвас шухăшпа, нимĕçсем хулари базарсене вут тĕртсе янă. Пушар вăхăтĕнче гитлеровецсем урамсенче 400 çынна ытла персе вĕлернĕ. Хулара пурăнакансенчен мĕн туртса илме май пуррине пурне те туртса илсе тухса кайнă. Выçлăх тата сивĕ пирки çынсем урамрах вилеççĕ.

* * *

Нимĕçсен Нейссе хулинче пурăнакансен йышĕнчен юлашки çурçул хушшинче виçĕ пайран пĕр пайĕ чакнă. Хулари çамрăксенчен чылайĕшĕсем фронтра вилнĕ. 6 уйăх хушшинче Нейссере выçлăх пирки вилнисем тата нуша пирки хăйсене хăйсем вĕлернисем 179 çын пулнă. Хулари мĕнпур ачасенчен 43 проценчĕ туберкулезпа чирлеççĕ. Ачасем хушшинче вилекенисен шучĕ темиçе хут ӳснĕ.

Январĕн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç вăйлăн çапăçнă. Пирĕн чаçсем çĕнĕрен малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра **Нелидово** хулине (Ржев—Великие Луки хушшинчи чугунçул магистралĕ çинче), тытса илнĕ.

Январĕн 24-мĕшĕнче нимĕçсенне 39 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче противникăн 5.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Январĕн 24-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем тăшманăн 4 танкне, 3 бронемашинине, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 280 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 130 лавне, 3 полевой орудине прислугисемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 5 эшелона çапса аркатнă, противник пехотин 3 батальонне тата конницăн эскадронне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Фактов юлташ командир пулса ертсе пыракан кавалери чаçĕ (Хĕвеланăç фрончĕ), артиллерирен персе хатĕрленнĕ хыççăн, нимĕçсен пехотин вăйлă латнă батальонне атакăланă. Çав батальон К. ялне хӳтĕлесе тăнă пулнă. Противник, çар грузĕсем тиенĕ 33 автомашина тата хĕçпăшалсем нумай пăрахса хăварса, тарма тытăннă. Тепĕр участокра пирĕн часть нимĕçсен контратакине сирсе пăрахнă. Тăшман хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсене, вилнисене шутласан кăна та, 200 çын çухатнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, нимĕçсем хыттăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, вĕсене вăйлăн çирĕплетнĕ вырăнтан хăваласа кăларнă. Противник пысăк çухатусем тӳснĕ.

* * *

13 йĕлтĕрçĕ-автоматчик, красноармеец Иванов юлташ ертсе пынипе, халăх пурăнакан пĕр пункта, нимĕçсем йышăнса тăнă çĕре, çĕмĕрсе кĕнĕ те тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 80 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Б. юлташăн партизанла отрячĕ, Тулăпа Мускав облаçĕсен халĕ нимĕçсенчен ирĕке кăларнă районĕсенче кĕрешнĕскер, гитлерла захватчиксене вăйлăн çапа-çапа çĕмĕрнĕ, Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшса пынă. М. хуторĕнче партизансем, нимĕçсен часовойĕсене вĕлерсе пĕтерсе, тăшманăн продовольстви складне сирпĕнтерсе янă. Тепĕр темиçе кунтан отрядри боецсем пуçтарса кĕмен кантăр пуссинче тăшманăн 4 танкĕ ларнине асăрханă. Танксем патне систермесĕр шăвăнса пырса, партизансем машинăсем çине танксене пĕтермелли гранатăсем пăрахнă. Çакăнта нимĕçсен 2 танкне пĕтерсе тăкнă, гитлерла танкистсене 8 çынна вĕлернĕ.

Партизансен разведки В. станцинче тыткăна лекнĕ красноармеецсен групни нимĕçсен пысăк отрячĕн аллинче тăни çинчен пĕлнĕ. Нимĕçсем кăнтăрлахи апата вырнаçса ларнă самантра суйласа илсе, партизансем тăшман çине виçĕ енчен пырса тапăннă. Нимĕçсем, паникăна ӳксе, хăйсен салтакĕсен 27 виллине пăрахса хăварса, тарса пĕтнĕ. Партизансем темиçе вуншар красноармееца ирĕке кăларнă.

* * *

Нимĕçсен 126-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 422-мĕш полкăн командирĕ январĕн 5-мĕшĕнче офицерсене чĕнсе çырнă приказа пирĕн войскăсем тытса илнĕ. Çав приказра çапла каланă: «Çичĕ уйăх хушшинчи çапăçусем хыççăн полкри офицерсен составĕ ывăнса çитсе халран кайнă. Кунсăр пуçне нумай офицерсем вилсе тата аманса пĕтнĕ. Пирĕн пата запасран килнĕ господин офицерсен опычĕ çук. Каялла чакнă чухнехи çапăçусем дисциплинăна хавшатрĕç. Материальнăй чаçсемпе орудисене тата приборсене тыткаласси, запассемпе чĕртаварсем мĕн чухлĕ пуррине шута илсен, пĕрре те килĕшӳллĕ мар пулса тăрать. Каялла чакнă чухне материальнăй чаçсене çухатни питех те йывăр. Полка панă приказсене пурнăçа кĕртменнисем час-часах пулаççĕ. Офицерсем приказсене хирĕçленисем те пулаççĕ. Подчиненнăйсем час-часах хăйсем мĕнле пĕлнĕ çапла тума пăхаççĕ. Çакнашкал явленисен сăлтавĕсем, эпĕ çӳлте кăтартнă пек, офицерсем ывăнса çитни тата опытлă марри пулса тăрать тесе шутлатăп. Анчах вĕсен пурин те хăйсене çавăн пек тыткалассине пĕтермелле. Çакна тума хăйсене начартарах туякан офицерсен шăлĕсене çыртса тӳсмелле».

Нимĕçсен полкĕн çав командирĕ хăйĕн офицерĕсене панă канаш гитлерла войскăсенчи лару-тăрăва нимĕнрен те лайăх кăтартса парать.

* * *

Новосибирск облаçĕнчи Кемерово районĕнчи колхозсем хăйсен тырă памалли обязательствисене тултарнă хыççăн государствăна 160.000 пăт тĕшши тырă сутнă. Çав облаçрах Тяжински районри колхозсем государствăна хăйсен ытлашши тырпулĕнчен 100.000 пăт сутнă.

Январĕн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Пирĕн пĕр часть (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ), пĕр кун хушши çапăçса, халăх пурăнакан 10 пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă, тăшманăнне 6 миномет, 16 пулемет, 200 автомашина, 83 лав, артиллери складне тата ытти çар пурлăхĕсене тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын ытла вилнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн боецсем, противника хирĕç пĕр кун хушши çапăçса, 38 оруди, 24 пулемет, 17 миномет, 67 автомашина, 21 мотоцикл, 10 радиостанци, продовольстви складĕ тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем пĕр пин çын ытла вилсе юлнă.

* * *

Чернышев юлташăн танковăй чаçĕ Хĕвеланăç фрончĕ) нимĕçсен 2 орудине, танка хирĕç пемелли 5 пăшалне тытса илнĕ тата тăшманăн 100 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Юлашутçăсен кĕçĕн лейтенант Рубец ертсе пыракан взвочĕ, тăшман пехотин сул тăрăх чакса пыракан колонни çине атака туса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла кассa вĕлернĕ.

* * *

Г. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Украинăн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, пĕвене взрыв туса татса янă та çула шыв илтерсе лартнă, çав çул тăрăх нимĕçсен лавĕсем фронт патнелле пынă пулнă. Çав кунах партизансем боеприпассем тиенĕ 2 грузовика сирпĕнтерсе янă, 17 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен 293-мĕш пехотнăй дивизийĕн 512-мĕш полкĕнчи штаб ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Руди Сальковский çапла кăтартса панă: «Старший фельдфебель Шлаго мана каласа панă тăрăх, пирĕн полкри тăм илсе янă 70 салтака лазарета ăсатнă. Юлашки вăхăтра дезертирство вăйланчĕ. Дезертирсен списокне командовани офицеральнопĕлтерме тытăнчĕ, çавăн пекех персе пăрахнă дезертирсен списокĕсене те пичетлесе кăлараççĕ».

* * *

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нимĕç çарĕнчи салтаксем час та часах офицерсен приказĕсене пурнăçа кĕртессине хирĕç тăраççĕ. Нимĕçсен 44-мĕш дивизийĕнчи полевой суд нумаях пулмасть салтаксен пысăк ушкăнне вĕлермелле туса приговор йышăннă. Эрнест Фогл ефрейтора вĕлерме йышăннă приговорта çапла каланă: «96-мĕш артполкри 3-мĕш батарейăри ефрейтор Эрнест Фогл çапăçури приказсене тăтăшах пурнăçа кĕртмесĕр тăнăшăн ăна персе пăрахмалла тунă. Юлашки маршра вăл боеприпассем тиенĕ лава кăтартса панă вырăна илсе пыма килĕшмен. Вахмистрпа батарея командирĕ иккĕмĕш хут приказ панă пулин те, Фогл вĕсен хушăвне пурнăçа кĕртессине хирĕç пулнă».

* * *

Курск облаçĕнчи Мясоедово ялĕнче нимĕçсем пур çуртсене те çунтарса янă, халăха вара тыла хăваласа кайнă. Пушар вăхăтĕнче пĕр хресчен хĕрарăмĕ хăйĕн икĕ ачине çунакан çуртран йăтса тухнă та, вĕсене урама хурса хăварса, хăй ыттисене çăлса хăварма кайнă. Урамра иртсе пыракан гитлеровецсем икĕ ачине те тытса илнĕ, вĕсене сăрт çинчен çырмана пăрахнă. Çак ялтан тухса каяс умĕн нимĕç бандичĕсем хĕрарăмсемпе хĕрачасене 12 çынна ирĕксĕрлесе мăшкăлланă, кайран вара вĕсене персе пăрахнă.

* * *

Франци халăхĕ нимĕç оккупанчĕсем çине тарăхасси кунран кунах ӳссе пырать. Труа хулинче шухăннă çынсен ушкăнĕ нимĕç комендатурин çуртне çĕмĕрсе тăкнă. Монбельярта хĕрарăмсем префектура çуртĕ патĕнче демонстраци тунă, хăйсене продовольстви пама ыйтнă. Демонстрантсем хушшинчен: «Ылханлă нимĕçсене тĕп тумалла», тесе каланă сасăсем илтĕннĕ.

* * *

Тутар АССР-чи машинно-тракторнăй станцисем çуракине хатĕрленеççĕ. Муслюмов станцин коллективĕ тракторсене пурне те юсаса çитернĕ. Республикăри машинно-тракторнăй станцисем чылайĕшĕ запаслă пайсене нумайĕшĕн хăйсемех туса хатĕрлеççĕ.

Оборона Халӑх Комиссариатӗнче

96-мӗш стрелковӑй дивизирен 14-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизи, 132-мӗшпе 142-мӗш танковӑй бригадӑсенчен 4-мӗшпе 5-мӗш гвардейски танковӑй бригадӑсем тӑвасси ҫинчен

Тӑван совет ҫӗршывӗшӗн нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пулса иртнӗ нумай ҫапӑҫусенче 96-мӗш стрелковӑй дивизи, 132-мӗшпе 142-мӗш танковӑй бригадӑсем хӑюллӑ та паттӑр пулнине, дисциплинӑллӑ та организованно пулнине кӑтартрӗҫ.

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ татти-сыпписӗр ҫапӑҫса, 96-мӗш стрелковӑй дивизи 132-мӗшпе 142-мӗш танковӑй бригадӑсем фашистсен войскисене питӗ пысӑк ҫухатусем кӳчӗҫ, тӑшмана аркатмаллах пыра-пыра ҫапса, противникӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине пӗтерсе пычӗҫ, нимӗҫ захватчикӗсене нимӗн шеллемесӗр ҫӗмӗре-ҫӗмӗре пычӗҫ.

Тӑван ҫӗршывшӑн нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче ҫирӗплӗхпе паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн, дисциплинӑллӑ та организованно пулнӑшӑн, ҫав чаҫсен личнӑй составӗ геройлӑх кӑтартнӑшӑн ҫӳлте асӑннӑ дивизипе бригадӑсенчен гвардейски дивизипе бригадӑсем тунӑ. Уйрӑмӑн илсен:

1. 96-мӗш стрелковӑй дивизирен—14-мӗш гвардейски стрелковӑй дивизи—дивизи командирӗ Совет Союзӗн Геройӗ генерал-майор **Шепетов.**
2. 132-мӗш танковӑй бригадӑран—4-мӗш гвардейски танковӑй бригада—бригада командирӗ танковӑй войскӑсен генерал-майорӗ **Кузьмин.**
3. 142-мӗш танковӑй бригадӑран—5-мӗш гвардейски танковӑй бригада—бригада командирӗ—танковӑй войскӑсен генерал-майорӗ **Михайлов.**

Асӑннӑ дивизипе бригадӑсене гварди ялавӗсем параҫҫӗ.

Артиллерин 21-мӗш, 127-мӗш, 445-мӗш, 881-мӗш тата 848-мӗш полкӗсенчен гвардейски полксем тӑвасси ҫинчен

Тӑван совет ҫӗршывӗшӗн фашистла захватчиксене хирӗҫ пулса иртнӗ нумай ҫапӑҫусенче артиллерин 21-мӗш, 127-мӗш, 445-мӗш, 881-мӗш тата 848-мӗш полкӗсем хӑюллӑ та паттӑр, организованно та дисциплинӑллӑ пулнине кӑтартрӗҫ.

xxxxx

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ татти-сыпписӗр ҫапӑҫса, ҫак полксем тӑшманӑн войскисене питӗ пысӑк ҫухатусем кӳчӗҫ, тӑшмана аркатмаллах хытӑ пыра-пыра ҫапса, противникӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине пӗтерсе пычӗҫ, нимӗҫ захватчикӗсене нимӗн шеллемесӗр ҫӗмӗре-ҫӗмӗре пычӗҫ.

Тӑван ҫӗршывшӑн нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче ҫирӗплӗхпе паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн, дисциплинӑллӑ та организованно пулнӑшӑн, ҫав полксен личнӑй составӗ геройлӑх кӑтартнӑшӑн ҫӳлте асӑннӑ полксенчен гвардейски полксем тунӑ. Уйрӑмӑн илсен:

1. Артиллерин 21-мӗш полкӗнчен—артиллерин 5-мӗш гвардейски полкӗ—полк командирӗ подполковник **Н. В. Игнатов.**
2. Артиллерин 127-мӗш полкӗнчен—артиллерин 6-мӗш гвардейски полкӗ—полк командирӗ майор **А. П. Синочкин.**
3. Артиллерин 445-мӗш полкӗнчен—артиллерин 7-мӗш гвардейски полкӗ—полк командирӗ подполковник **В. И. Тарасов.**
4. Артиллерин 881-мӗш полкӗнчен—артиллерин 3-мӗш гвардейски полкӗ—полк командирӗ подполковник **А. А. Колесов.**
5. Артиллерин 848-мӗш полкӗнчен — артиллерин 9-мӗш гвардейски полкӗ—полк командирӗ капитан **Д. И. Скоробогатов.**

Асӑннӑ полксене гварди ялавӗсем параҫҫӗ.

Гитлерла командованин черетлӗ элекӗ

Кӑҫалхи январӗн 23-мӗшӗнче Берлинри радио пӗр пӗлтерӳ панӑ, ҫав пӗлтерӳ гитлеровецсен ӑс-тӑнӗсем пӑтрanса кайнине уҫҫӑн кӑтартса парать, вӗсен ҫак пӗлтерӗвӗ Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнче нимӗҫ войскисен нумай ӑнӑҫсӑрлӑхсем пулнӑ пирки ирӗксӗрех пама тивнӗ. Ҫав пӗлтерӳре, совет войскисем юлашки 6 эрне хушшинче пӗр миллион ҫын ҫухатнӑ тесе, кулӑшла цифрӑсем илсе кӑтартнӑ. Пӳрнерен ӗмсе кӑларнӑ ҫак цифрӑсем чӑнлӑхпа нихӑш енчен те ҫыхӑнса тӑмаҫҫӗ. Чӑннипе илсен, кӑтартнӑ срокра совет войскисен 30.000 ҫынна яхӑн вилнӗ. Ыйтас пулать: совет войскисен ҫухатӑвӗсем ҫинчен калакан пӗтӗмпех суя даннӑйсене гитлерла шулерсемпе фальшивомонетчиксем мӗн тума шухӑшласа кӑларнӑ-ха? Паллах, вӗсем ҫав суя даннӑйсене, Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнче нимӗҫ войскисем тунӑ питех те пысӑк ҫухатусене пытарса хӑварас тесе шухӑшласа кӑларнӑ. Паллӑ ӗнтӗ, декабрӗн 6-мӗшӗнчен пуҫласа январӗн 15-мӗшне ҫити вӑхӑтра гитлеровецсен салтакӗсемпе офицерӗсем 300.000 ҫын вилнӗ. Нимӗҫ войскисен амантса, тӑм илсе тата чирлесе пӗтнӗ ҫыннисене шута илме те хӗн. Нимӗн иккӗленмелли те ҫук, ҫав ҫухатусем вӗсем питех те пысӑк. Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнчи хӑйсен ӑнӑҫсӑрлӑхӗсене гитлерла ухмахсем совет войскисен ҫухатӑвӗсем ҫинчен юмахри пек ӳстерсе, юптарса пӗлтернисемпе витсе хурасшӑн. Анчах ҫакӑ вӑл ӑнӑҫлӑ пулаймӗ! Ӑнланмалларах каласан, нимӗҫ войскисем калама ҫук пысӑк ҫухатусем тунине Германин информаци бюровӗ январӗн 21-мӗшӗнче ҫирӗплетсе панӑ, ун чухне вӑл ҫапла пӗлтерчӗ: Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнче оборонӑллӑ йывӑр ҫапӑҫусем пулса пынине шута илсе, Германин полицин начальникӗ Гиммлер ташӑ кружокӗсенче, вӗсем обществӑллӑ характерлӑ мар пулсан та, ташлама чарнӑ. Ташлама чарса, палач Гиммлер ахалех чӑрманать: Германире халӗ ташлас текенсем нумаях тупӑнмаҫҫӗ пулӗ, мӗншӗн тесен нимӗҫсен кашни ҫемьинче тенӗ пекех Гитлерӑн преступлениллӗ тата юнлӑ политикине пула вилнӗ е аманнӑ ҫынсем пур. Германири юн юхтарса, выҫлӑха пула шыҫӑнса пыракан тата чирсене пула вилсе пӗтекен халӑх халӗ ташӑсем ҫинчен шухӑшлать-ши ӗнтӗ?

СОВИНФОРМБЮРО.

Фашистсен урнӑ йыткӗтӗвӗсене хӑвалатпӑр

(Действующи армирен килнӗ ҫыру)

Пирӗн тӑван ҫӗршыва Урал таранах «ҫиҫӗмле хӑвӑртлӑхпа» йышӑнса илме ӗмӗтленнӗ Гитлер ҫарӗн урнӑ йыттисем халӗ ӗнтӗ, хӑйсен юлташӗсен виллисене таптаса хӑварсах, каялла тараҫҫӗ.

Ик-виҫ уйӑх каярах ҫеҫ-ха нимӗҫсем, ҫак хӗле хӗрлӗ столицӑра—Мускавра, Ленинградра тата ытти хуласенчи ӑшӑ хваттерсенче ирттеретпӗр, тесе мухтанчӗҫ. Анчах та вӗсен ҫак капӑйчӑк ӗмӗчӗ пурнӑҫа кӗреймерӗ. Тӑшмансем хапсӑнни халӗ те, ӳлӗмрен те—нихӑҫан та пулма пултараймасть. Вырӑс халӑхӗн йывӑр чукмарӗ епле вирлӗн лекнине ютҫӗршыв захватчикӗсем ӗлӗкрен пуҫласах — Чудь кӳлли ҫинче, Бородино уйӗнче, Севастополь вӑрҫи кунӗсенче, граждӑн вӑрҫи ҫулӗсенче, Хасанра, Халхин-Голра, Финляндипе Карели вӑрманӗсенче тата ытти чух та аван тутаннӑ.

Германи фашизмӗ, юнлӑ Гитлер хушнипе, пирӗн ҫӗршыв ҫине вӑрӑ-хурахла ултавлӑн тапӑнса кӗчӗ. Гитлер ордисем пирӗн ҫӗршыври хуласенче чаплӑ фабрикӑсемпе заводсем ӳссе ларнӑ вӑхӑтра, ялсенче культурӑллӑ колхозсем чечекленсе ҫитнӗ тапхӑрта тата пирӗн колхоз уйхирӗсенче вӑйлӑ тырпул ешӗрсе ӳснӗ самантра тапӑнса кӗчӗҫ.

Эпӗ, Хӗрлӗ Ҫарӑн фронтри чаҫӗсенче чылайранпа ҫӳресе, хам куҫӑмсемпех ҫаксене курма пултартӑм. Белоруссире, Орел, Курск, Воронеж облаҫӗсенче пирӗн нумай ялсенче ҫавтери ҫирӗпленсе ҫитнӗ вӑйлӑ колхозсем пурччӗ. Вӑл колхозсенче культурӑллӑ та пуян фермӑсем, клубсем, шкулсем, сывлӑха упрамалли пунктсем, ясլӗсем, ача ҫуратмалли суртсем тата ытти те пурччӗ. Колхоз уй-хирӗсенче пур ҫӗрте те хӳхӗм тырпул хумханса ларатчӗ. Ку тырпула пӗтӗмпех йӗркеллӗ вырса пуҫтарнӑ пулсан, пирӗн ҫӗршыв иртнӗ ҫулта чӑннипех те, Сталин каланӑ пек, 8 миллиард пӑт тырӑ илме пултаратчӗ. Анчах та выҫӑ куҫлӑ тискер тӑшман пирӗн мирлӗ ӗҫсене чарса, ырлӑхлӑ пурнӑҫа вӑхӑтлӑха пӑсса хучӗ.

Халӗ акӑ эпир ҫав пурне те ҫӗмӗрекен, пурне те ҫунтакан ирсӗр фашистсен ҫарне, хамӑр чакса тухнӑ вырӑнсемпе тенӗ пекех, каялла хӑваласа пыратпӑр. Анчах та мӗскер куратпӑр-ха эпир хамӑрӑн Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫ фашисчӗсенчен ирӗке кӑларакан хуласемпе ялсенче? «Европӑра ҫӗнӗ йӗрке тӑватпӑр» тесе кӑшкӑрашакан нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсем ӑҫта ҫитсе пӑртак пурӑннӑ, ҫавӑнта пур ҫӗрте те чуна кисретекен юнлӑ йӗрсем палӑраҫҫӗ. Пур ҫӗрте те ишӗлтернӗ, ҫунтарса янӑ ҫурт-йӗрсем, тӗппипе ҫаратса пушатнӑ хуласем, кӗлленнӗ ял вырӑнӗсем! Пур ҫӗрте те ҫынна ҫакса вӗлермелли такансем!

Пыйтланса кайнӑ нимӗҫ фашисчӗсем мӗскер тӗлне пулнӑ — пурне те ҫаратаҫҫӗ. Вӗсем пӗр суртра та тустарман кӗтес хӑварман. Пӗр ҫынна та — ватти-вӗттипех — персе е ҫакса вӗлерессипе хӑратмасӑр хӑварман. Сӑмахран, пӗр тӗслӗхе илсе кӑтартам. Вӗсем Р. салинче шӑл тӳрлетекен врач патне пырса кӗнӗ. Ҫак врачӑнне ҫӗвӗ ҫӗлемелли йӗпписене, ҫипписене, перламутр тӳммисене, шӑл тасатмалли щеткипе порошоксене, супӑнӗсене йӑлтах илсе тухса кайнӑ. Кашни килтен тенӗ пекех вӗсем пальтосемпе галошсене, кӗпе-йӗмсене, ача-пӑча тумтирӗсене, ботинкӑсене иле-иле тухса кайнӑ. Пӗр сӑмахпа каласан, куҫ умне мӗскер тӗл пулнӑ, ҫавсене пурне те ҫаратса тухнӑ. Кашни нимӗҫ салтакӗ ытларах ҫаратма пикенет, ҫаратса пухнӑ япаласене посылкӑпа хӑйӗн ҫемьине, «савнӑ арӑмне» ярса пама тӑрӑшать.

Фашистсен урнӑ салтакӗсем илемлӗ шкулсене, больницӑсене, клубсене тата уйрӑм хуҫалӑхри суртсене те ҫунтара-ҫунтара хӑвараҫҫӗ. Ачасемпе стариксене урама хӑваласа кӑларса, пулеметсенчен пере-пере пӑрахаҫҫӗ. Нимӗҫ фашисчӗсем йышӑнса илнӗ вырӑнсенчи халӑх выҫӑпа вилес патне ҫитнӗ, мӗншӗн тесен вӗсен юлашки ҫӑкӑрне те йӑлтах туртса илнӗ. Фашистсенчен таҫатнӑ ялсене пырса кӗрсен, пур ҫӗрте те вилес патне ҫитнӗ, чӑлахланнӑ ҫынсем ахлатнине ҫеҫ куратпӑр.

Фашистсем вӗлерессинчен, ҫаратассинчен шикленнӗ ҫынсем подвалсене, нӳхрепсене, ҫӗр шӑтӑкӗсене пытанса ларса, уйӑхӗпе никама курӑнмасӑр пурӑннӑ. Р. салинчи больницӑра чӗрӗ юлнӑ медицина сестрисем пӗр аманса юлнӑ красноармеецa 35 талӑк хушши нӳхрепре пытарса усранӑ. Вӗсем ӑна вӑрттӑн пыра-пыра пӑхнӑ, тӑрантарнӑ, суранне ҫӑва-ҫӑва тасатса сыхнӑ. Ҫак салана Хӗрлӗ Ҫар пырса ҫитсен, тыткӑнран ҫӑлӑннӑ красноармеец, савӑннипе, суранӗ тӳрленсе ҫитичченех Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсемпе пӗрле нимӗҫ фашисчӗсене хирӗҫ ҫапӑҫма тухса кайрӗ.

Хаклӑ вулаканӑмсем! Пыйтлӑ нимӗҫ солдафонӗсем мӗнле усал ӗҫсем, мӗнле тискерлӗхсем туни ҫинчен эпӗ сире темӗн чухлех ҫырса пӗлтерӗттӗм. Вӗсем тӑвакан ирсӗр ӗҫсем ҫинчен пурне те каласа пама ку кӗске ҫырура вырӑн та ҫук.

Сире тата хальхи нимӗҫ салтакӗсем мӗскерли интереслентерет пулӗ. Хальхи нимӗҫ салтакӗсем хушшинче пуринчен ытла е 17 ҫулти ҫамрӑксем е ҫӳҫӗсем кӑвакарма пуҫланӑ ватӑсем тӗл пулаҫҫӗ. Вӗсем ҫӳхе шинель тӑхӑнса янӑ сапланклӑ тасамар гимнастеркӑпа, брюкипе, урисенче — кивелнӗ ботинкӑсем. Хӑшпӗрисем тата ялсенчен е вилнӗ боецран ҫаратса илнӗ тӑлӑпа тӑхӑнса янӑ, пуҫӗсем ҫине ача-пӑча ҫӗлӗкне лартнӑ, хӑшӗ ҫуллахи пилоткӑпах, анчах та пилотка айӗнчен вара хӗрарӑм чӑлхин кунчине тӑхӑнса янӑ. Вӑл сивӗрен хӑранипе хутланнӑ, кӗҫ-вӗҫ сивӗ мучи сӑмсаран, хӑлхаран е алӑ-ура пӳрнисенчен ҫунтарса илесрен шикленсе чӗтресех тӑрать. Тыткӑна лексен вӗсем питех те хӑраҫҫӗ вара. Пирӗн боецсене вӗсем час-часах: «Мӗншӗн хӑвалатӑр пире? Эпир хамӑрах киле таратпӑр. Кунта сивӗ, пӗтетпӗр эпир»... — тесе йӑлӑнаҫҫӗ. Вӗсем выҫӑ, — пирӗн колхозниксен юлашки татӑкне туртса илеҫҫӗ. Кашниех калама ҫук пыйтланнӑ. Сӑнӗсем тасамар, тумтирӗсем вараланчӑк. Акӑ мӗнле ҫынсенчен тӑрать Гитлерӑн хальхи ҫарӗ!

Вулакансем! Пирӗн чаплӑ Хӗрлӗ Ҫар Германи империалисчӗсен урнӑ ҫарне тӗппех ҫапса аркатас кун инҫе мар. Гитлер пуҫне ҫапса ҫӗмӗресси ҫывӑх. Анчах та ку татӑклӑ ҫӗнтерӗве тӑвас тесен, пирӗн ҫав тискер тӑшмана хирӗҫ татах та чылай ҫапӑҫма лекет-ха. Нумай вӑя хумалла, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшмалла. Хӗрлӗ Ҫара кам мӗскер пама пултарать, ҫавӑнпа пулӑштӑр. Тискер тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗнтерес тесен, пирӗн пурин те — фронтра та, тылра та кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлемелле.

Эпир чарӑнса тӑмасӑр — малалла, хӗвеланӑҫнелле пыратпӑр. Тӑшман чакать, ӑна хӑвалатпӑр. Эсир, тылра пурӑнакан тӑвансем, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшса тӑмалли ҫинчен пӗр самантлӑха та ан манӑр! Ҫавӑн пекех сирӗн фашизм аллинчен хӑтарнӑ граждӑнсене пулӑшасси ҫинчен те шутламалла.

Тӑванлӑ салампа

военврач И. СТОЛЯРОВ.

ВЛКСМ Мускав Область Комитечӗн пленумӗ

Январӗн 23-мӗшӗнче Мускавра ВЛКСМ Мускав область комитечӗн пленумӗ пулса иртнӗ. Пленум комсомолецсемпе ҫамрӑксене ҫар ӗҫне вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе комсомол организацийӗсем умӗнче малашне мӗнле задачӑсем тӑни ҫинчен сӳтсе-явнӑ. Ку ыйту тӑрӑх ВЛКСМ Мускав область комитечӗн тата Мускав хула комитечӗн секретарӗ Пегов юлташ доклад туса панӑ.

Пленум ВЛКСМ хулари тата районсенчи комитечӗсене районсенчи райвоенкоматсем ҫумӗнче вӗренмен комсомолецсене всевобучӑн программи тӑрӑх пурне те обязательнӑй йӗркепе вӗрентсе хатӗрлессине пурнӑҫламашкӑн хушса хӑварнӑ.

Комсомолкӑсен пурин те апрелӗн 1-мӗш тӗлне «Готов к санитарной обороне» значок илмешкӗн нормӑсене парас пулать. Кунсӑр пуҫне тата пур комсомолецсен те, ҫамрӑксемпе хӗрсен те, ҫав срок тӗлнех «Готов к противовоздушной и противохимической обороне» значок илмелли нормӑсене парас пулать.

Пленум облаҫри комсомолецсене пурне те вӑрҫӑ ӗҫне татах та тимлӗрех, татах та лайӑхрах вӗренсе пыма чӗннӗ.

Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ уява Мускав облаҫӗнчи ҫамрӑксен производствӑра ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе, вӑрҫӑ ӗҫне вӗрентессине вӑйлатнипе паллӑ тумалла, хамӑрӑн чи тискер тӑшмана — Германи фашизмне ҫӗмӗрсе тӑкмашкӑн Хӗрлӗ Ҫара пур енчен те пулӑшса пынипе паллӑ тумалла.

Ҫав ларурах пленум ВЛКСМ Егорьевск райком секретарӗ Радинова юлташ: Егорьевск районӗнчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем ҫуракине хатӗрленес ӗҫре мӗнле хутшӑнса ӗҫлени ҫинчен тунӑ доклада итлесе сӳтсе-явнӑ. Пленум комсомолӑн Мускав облаҫӗнчи мӗнпур организацийӗсене те ҫуракине хатӗрленес ӗҫе вӑйлатма хушса хӑварнӑ.

Пленум комсомол организацийӗсен тракторсене тата ялхуҫалӑх инвентарӗсене ремонт тӑвас ӗҫре, запаслӑ пайсемпе инструментсене пухас ӗҫре, ҫамрӑксенчен ялхуҫалӑх ӗҫӗнче кирлӗ специалистсем хатӗрлес ӗҫре пулӑшса пыма кирли ҫине кӑтартса хӑварнӑ. ВЛКСМ хуласемпе ялсенчи комитечӗсене тата пуҫламӗш организацисене нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи колхозсене кулленех конкретно пулӑшса пыма хушса хӑварнӑ.

(ТАСС).

Автозаводри ҫамрӑксен чӗнӗвӗ ҫине ответлесе

СӖНТӖРВӐРРИ. Сталин ячӗпе тӑракан автозаводри комсомолецсемпе ҫамрӑксен чӗнӗвне районри нумай предприятисенче, колхозсенче сӳтсе-яврӗҫ.

«Портной» артельри комсомолецсемпе ҫамрӑксем ҫав чӗнӗве сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн татах та лайӑхрах ӗҫлеме пулчӗҫ. Пӗрремӗш квартал планне февралӗн 23-мӗш тӗлне 150 процент тултарма, двухсотниксен йышне икӗ хут ӳстерме пулса хӑйсем ҫине обязательство илчӗҫ.

Катка-пичке тӑвакан заводри комсомолецсем те плана 150 процент тултарма, двухсотниксен йышне икӗ хут ӳстерме обязательство илнӗ.

Автозаводри комсомолецсемпе ҫамрӑксен чӗнӗвне Юрьевкӑри комсомолецсем хӑйсен пухӑвӗнче сӳтсе-явнӑ. Колхоз авӑн ҫапса пӗтерейменни пирки, вӗсем февралӗн 10-мӗш тӗлне авӑн ҫапса пӗтерме сӑмах панӑ. Ҫавӑн пекех «Малалла» колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксем те февралӗн 20-мӗшчен вӑрлӑхсене сортласа ҫитерме, 5 центнер кӗл пухма, 10 гектар ҫинче юр тытма обязательство илнӗ.

ЮРИЧЕВ.
ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.

Ӑмӑртӑва хутшӑннӑ хыҫҫӑн

ҪӖМӖРЛЕ. («**Чӑваш Коммуни» корр.**). Древкомбинатри комсомолецсемпе ҫамрӑксем автозаводецсем чӗнсе каланине хапӑл туса кӗтсе илчӗҫ. Хальхи вӑхӑтра цехсемпе сменӑсенче социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырать. Кашни рабочипе работница Хӗрлӗ Ҫар XXIV ҫул тултарнӑ куна производствӑра ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илессишӗн кӗрешет.

Пӗрремӗш номерлӗ цехри комсомолка Ксения Данилова ертсе пыракан ҫамрӑксен бригади отечественнӑй вӑрҫӑ кунӗсенче хӑйне панӑ задание куллен икӗ хут ирттерсе тултарса ӗҫлет. Бригадӑри кашни рабочипе работница технологи процесне лайӑх вӗренсе ҫитнӗ, кирек мӗнле васкавлӑ заказа та вӗсем срокчен тултараҫҫӗ.

— Эпир Хӗрлӗ Ҫар XXIV ҫул тултарнине хамӑра панӑ плана икӗ хут ирттерсе тултарнипе кӗтсе илме пулатпӑр. Калас пулать, ӑна эпир ытлашшипех тултаратпӑр,—тет Данилова юлташ.

Чӑнах та, январь уйӑхӗ пуҫланнӑранпа бригада яланах икшер норма, уйрӑм кунсенче унтан та ытларах тултарса ӗҫлет. Юлашки вӑхӑтра бригада плана 215—225-шер процент тултарать.

Хастарлӑ стахановец В. Ширяев ертсе пыракан бригада та ҫак кунсенче нихӑҫанхи пек мар хастаррӑн ӗҫлет.

Куллен икшер нормӑран кая мар!— ҫакӑн пек лозунгпа ӗҫлеҫҫӗ бригада членӗсем. Январӗн 13-мӗшӗнче ку бригада плана 163 процент, 14-мӗшӗнче 322 процент тултарнӑ. Малашне бригада татах та пысӑкрах ҫитӗнӳсем тӑвассине пӗр иккӗленмесӗрех шанма пулать.

1942 ҫулти Бородино

Тӑшманӑн ҫула пӳлсе тӑракан укрепленийӗсене шӑла-шӑла ыватса, персе тӑмалли вут-хӗм йӑвисене сирпӗнтерсе ярса, тӑшмана шартлама сивӗ ҫул тӑрӑх каялла хӑваласа, пирӗн воинсем хӗвеланӑҫнелле пыраҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ Можайск, Бородино уйхирӗ тата Уварово хыҫала тӑрса юлчӗҫ.

Нимӗҫсем Мускав патнелле мӗнле кашлайса тапӑнса пынине эпир аван астӑватпӑр. Вӗсем кунта 1941 ҫулти октябрь уйӑхӗнче пирӗн укрепленисен айӑккипе иртсе кайрӗҫ. Ҫав вӑхӑтра вӗсем Наполеонран кулса: «Мӗне кирлӗ пулнӑ-ши ӑна Бородино патӗнче ҫапӑҫса тӑрасси» тесе тӑрӑхлатчӗҫ. Акӑ вӗсем ӗнтӗ Мускава ҫитсе кӗмелле, унта пымалли ҫул вӗсемшӗн уҫӑ выртать. Ҫапла эпир ҫав куна — сивӗ те ҫумӑрлӑ октябрь кунне, нимӗҫсем Можайск патне ҫывхарса ҫитнӗ вӑхӑта, астӑватпӑр. Тӑшман Мускав патӗнчи ҫӗрсем ҫине пырса кӗчӗ. Ҫынсем пӗр-пӗринчен: «Мускав мӗнле тӑрӗ-ши?» тесе ыйтатчӗҫ. Нимӗҫсем Можайска йышӑнса илчӗҫ, ҫакӑн хыҫҫӑн вӗсем шоссе тӑрӑх Дорохово патнелле танксем ячӗҫ. Гусеницӑсен кашни чӑнкӑртатӑвӗ чӗресене пырса тиветчӗ. Артиллерирен кӗмсӗртеттерни те ҫывхарса ҫитрӗ, тӑшман авиацийӗ хула ҫине ирхине те, кӑнтӑрла та, каҫпала та, ҫӗрле те вӗҫсе пыма тытӑнчӗ.

Ҫав ӗмӗр астуса тӑмалла октябрь кунӗсенче Мускавшӑн ҫавтери хаяр та пысӑк ҫапӑҫу пуҫланса кайрӗ, вӑл пӗр самантлӑха та лӑпланмасӑр татти-сыпписӗр пычӗ.

Ку ҫапӑҫу 1812 ҫулти пек пӗр Бородино уйхирӗпе е пӗр тӑвайккипе ҫеҫ чарӑнса тӑмарӗ. Хальхи тапхӑрта Бородино уйхирӗ Мускава ҫуркӑшӑл пек хупӑрласа, Яхромӑран пуҫласа Михайлов хули таран, ҫурҫӗртен кӑнтӑра ҫитиччен ҫавӑрса илчӗ. Кунти ҫапӑҫӑва хальхи вӑрҫӑ техникин пӗтӗм аслӑ арсеналӗ — танксем те, артиллери те, авиаци те, пехоти те кӗрсе кайрӗ.

Анчах та Мускав нимӗҫсемшӗн ҫӗнсе илме ҫук крепость пулса тӑчӗ.

Халӗ ӗнтӗ, пӗтӗм Мускав таврашӗнчи ҫӗре тӑшманран хӑтарнӑ хыҫҫӑн, ҫав ҫапӑҫӑва, нимӗҫсене вирлӗн ҫапса амантнӑ вӑйлӑран та вӑйлӑ ҫапӑҫу кунӗсене ирӗксӗрех аса илетӗн. Кашни ҫапӑҫурах ҫӗнтерӳ тӑвасси пӗр танксемпе тупӑсенчен кӑна мар, ҫакӑ вӑл тата войскӑсен чунхавалӗпе унӑн шалти вӑйӗ, тӳсӗмлӗхӗ ҫирӗп пулнинчен те килет; хӑшпӗр вӑхӑтра войскӑсен вӑй-хӑвачӗ, вӗсен шалти ҫирӗплӗхӗ хурҫӑран та вӑйлӑрах, бетонран та ҫирӗпрех, бомбӑсемпе снарядсенчен те хӑрушӑрах пулать, мӗншӗн тесен ҫак вӑйпа ҫирӗплӗх вӑл ҫынсен юнӗпе вӗсен чӗрисенче пытанса тӑрать.

Наполеон ҫарӗ 1812 ҫулта Мускав патӗнче вырӑс войскисен вӑй-хӑватне ҫӗмӗрме пултараймань; Бородино уйхирӗнчи ҫапӑҫу Кутузов полкӗсен ҫирӗплӗхне пит те уҫҫӑн кӑтартса паракан ҫапӑҫу пулнӑ. Нимӗҫсем те 1941 ҫулта совет войскисен вӑй-хӑватне ҫӗмӗрме пултараймарӗҫ.

Тӑшман, хӑйӗн вӑйлӑ танкӗсемпе тата механизациленӗ колоннисемпе уҫӑ курса, пирӗн Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи чаҫсене ҫавӑрса илме хӑтланчӗ. Ҫакӑн пек кӗрешӗве тӗнчери нимӗнле ҫӗршыв та, нимӗнле ҫар та тӳссе тӑма пултарайман пулӗччӗҫ. Можайск енчи фронтӑн пӗр участокне нимӗҫсем татса кӗнӗ самантра, совет воинӗсем, хӗҫпӑшал пӑрахса тӑшмана парӑнас вырӑнне, йӑлтах урӑхла, нимӗҫсене хирӗҫ юлашки юн тумламӗ юлмиччен ҫапӑҫрӗҫ. Пирӗн дивизисем, тӑшман ҫарӗсен ункисем витӗр тухса, нимӗҫсене тылран пыра-пыра ҫапрӗҫ. Ярцевӑран пуҫласа Бородинона ҫитиех сарӑлса выртакан аслӑ уйсен талккӑшӗнче, вӑрмансенче те, ҫулсем ҫинче те, кунӗн-ҫӗрӗн вӗҫӗмсӗр ҫапӑҫусем пычӗҫ. Нимӗҫсем Можайска илчӗҫ, анчах та вӗсен тылне хӑюллӑ ҫынсенчен, тӑшмана кӗтмен ҫӗртен пыра-пыра ҫапнипе хӑратакан, халиччен курман-илтмен хаярлӑхпа ҫапӑҫакан ҫынсенчен тӑракан тепӗр фронт тӑрса юлчӗ. Ку фронтри боецсем ҫине тӑшманӑн ҫӗршер бомбардировщикӗсем пыра-пыра бомбӑсем пӑрахнӑ, вӗсене винтовкӑсенчен, пулеметсенчен тата орудисенчен пенӗ, вӗсем ҫине танксем, автоматчиксем пыра-пыра тапӑннӑ. Анчах вӗсенчен пӗри те парӑнман. Окопсенче, блиндажсенче вырнаҫса тӑракан ҫынсем хаяр ҫапӑҫусене хатӗрленнӗ. Мускава сыхласа тӑракансен нихӑҫан та ҫак вӑхӑтри пек пысӑк тимлӗх пулман.

Нимӗҫсем ҫӗнӗ вӑйсене пуҫтарчӗҫ, наступление хатӗрленсе танксем тата артиллери пухса тӑратрӗҫ. Анчах ҫак вӑхӑтрах пирӗн вӑйсем те сехетрен-сехете ҫирӗпленсе пычӗҫ. Можайск патӗнчи шоссе ҫинче тӑшман пирӗн дивизисенчен пӗрине виҫӗ хутчен атакӑлама пӑхрӗ, анчах, 40 танк ҫухатса та, нимӗҫсем кунта нимӗн чухлӗ те малалла кайма пултараймарӗҫ. Совет воинӗсем хӑйсен вӑйне хытӑ шанса тӑнӑ. Артиллерипе минометсен вучӗ айӗнче вӗсем кӑшт та каялла чакмасӑр хӑйсен рубежӗсене ҫирӗп тытса тӑнӑ.

Халӗ ӗнтӗ пирӗн войскӑсем нимӗҫсене Можайскран хӗвеланӑҫнелле хӑваласа пыраҫҫӗ. Вӗсене, ҫурри ҫарамассӑрсене, ҫӗтӗк-ҫатӑк тумланнӑскерсене, сасартӑк пыра-пыра ҫапса, юр тӑрӑх тармалла тӑваҫҫӗ, пирӗн пульӑсемпе снарядсенчен хӑтӑлас тесе, вӗсем юр кӗрчӗсем ӑшне тата шӑнса ларнӑ вӑрмансенче пытанаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем Бородино уйӗнчи тӑвайкки ҫинче, 130 ҫул ӗлӗк пулса иртнӗ вӑрҫӑ кунӗсенче Михаил Илларионович Кутузов тӑнӑ вырӑнта лартнӑ памятник патӗнче, чарӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫакӑнтах пирӗн боецсем Мускава ҫӑлассишӗн пурнӑҫӗсене хунӑ аслашшӗсене пытарнӑ уйпа пуҫӗсене мӑнкӑмӑллӑн тытса иртеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсем те Мускавшӑн пулса иртнӗ ҫавтери вӑйлӑ ҫапӑҫура чаплӑ ҫӗнтерӳ турӗҫ, ку кӗрешӳре вӗсенчен нумайӑшӗ пурнӑҫӗсене хучӗҫ, анчах ҫапах та вӗсем ҫӗнтерчӗҫ.

1942 ҫулти Бородино тӑшманшӑн 1912-мӗш ҫулти Бородинорӑн нумай инкеклӗрех пулса тӑчӗ. Ҫак уйра Наполеон вилмелле ҫеҫ аманнӑ, анчах унӑн ҫарӗ ҫавах та Мускава ҫитсе кӗме пултарнӑ. Гитлер Мускав урамӗсене кураймасӑрах юлчӗ. Унӑн ҫарӗ Мускав патне пымалли вырӑнсенче вӑйлӑн аманчӗ.

Кунсем ҫитӗҫ — Мускав урамӗсенчи юлашки хӳйӑр миххисене те илсе пӑрахмалла пулӗ. Хула хушши ҫутӑлса кайӗ. Ун чух вара пирӗн халӑх ҫак мухтавлӑ кӗрешӳ кунӗсенче Мускава тытса хӑварма, Российйна ҫӑлма пултарнӑ геройсене тивӗҫлипе тав тӑвӗ.

Нимӗҫсем наступлени туса килчӗҫ, вӗсем Мускав патне хальхи инҫете перекен артиллери снарячӗсем ҫитме пултарас таранах ҫитсе тӑчӗҫ. Вӗсем Ленинград тата Можайск шоссе ҫулӗсем патне икӗ артиллери полкӗ илсе килсе тӑратрӗҫ; анчах ку вӑхӑтра Кремльре те шанчӑклӑнах контрнаступлени тума хатӗрленсе ҫитнӗ. Тата икӗ кунран нимӗҫсем хӑйсен тин ҫеҫ илсе килнӗ пысӑк орудийӗсене пӑрахса хӑварсах, васкавлӑн каялла чакса кайрӗҫ, вырӑнӗпе вӗсем арканса кайса тарни те пулчӗ. Пирӗн войскӑсен, тӑшман ҫапнине нумай тӳсмелле пулчӗ пулин те, нумай ҫухатусем тумалла пулчӗ пулин те, паттӑрлӑхӗ ӳкмерӗ. Совет ҫыннисем хӑйсем ҫӗнтересси ҫине ӗненсе тӑчӗҫ, вӗсем ҫак ӗненӳпе пурӑнчӗҫ.

Тӑшмана ҫапса аркатрӑмӑр тени—ку хальхи вӑрҫӑ ҫине ҫӑмӑл шухӑшпа пӑхни ҫеҫ пулӗччӗ. Пирӗн умра татах та хаяр, татах та пысӑк ҫапӑҫусем тӑраҫҫӗ-ха. Ҫавах та Гитлер 1941 ҫулти октябрӗн 2-мӗшӗнче Мускавшӑн пуҫланӑ ҫапӑҫу нимӗҫсемшӗн начар пӗтни пуриншӗн те уҫӑмлӑнах курӑнать. Ҫак ҫапӑҫура пирӗн ҫар, Сталин юлташ ертсе пынипе, гитлерла Германие вирлӗн ҫапса амантрӗ.

Мускав тата Тула облаҫӗсем пӗтӗмпех ирӗке тухрӗҫ ӗнтӗ. Малалла хамӑр ҫӗршывӑн ытти районӗсене ирӗке кӑларасси тӑрать. Вӗсене ирӗке кӑларас сехет те инҫе мар, мӗншӗн тесен совет халӑхӗн ҫарӗ, халӑхсене ирӗке кӑларакан вӑйлӑ ҫар, шартлама сивӗсене те, ҫил-тӑмансене те пӑхмасӑр, вӑхӑчӗпе тарӑн юр кӗрчӗсем урлӑ ишсе каҫса та, аслӑ Сталинӑн: «Ҫӗнтерӳсем патне — малалла!» тесе чӗнекен сӑмахне ҫырнӑ ялавсемпе малалла ҫӗнтерсе пырать.

О. КУРГАНОВ.
(«Правда» хаҫат, январӗн 25-мӗш).

Ӗҫри боецсем

КАНАШ. («**Чӑваш Коммуни» корреспонденчӗ**). Сталин ячӗпе тӑракан автозаводри патриотсен чӗнӗвне районри предприятисенчи ҫамрӑксем хапӑл туса йышӑнчӗҫ. Вагонсем юсакан заводри комсомолецсем автозавод ҫамрӑкӗсен чӗнӗвне сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑнах 7 фронтовой бригада организацилерӗҫ. Вӗсен членӗсем—тӑван ҫӗршыва хӳтӗлес ӗҫе пӗтӗм вӑя, пӗлӗве, пултарулӑха паракан ҫамрӑксем, бригадирӗсем—стахановла ӗҫре пиҫсе ӳснӗ комсомолецсем.

Фронтовой бригадӑсем ӗҫлеме пуҫлани нумаях пулмасть-ха. Ҫак кӗске вӑхӑтрах вӗсем тӑван ҫӗршывшӑн, унӑн ирӗклӗхӗпе чыслӑхӗшӗн ҫӗнтерӳллӗ ӗҫлеме пултарнине кӑтартрӗҫ.

Юратнӑ Хӗрлӗ Ҫара, унӑн уявӗ тӗлне производствӑллӑ парнесем парас тесе, Чернухинпа Чесов юлташсен бригадисем социализмлӑ ӑмӑртӑва тухнӑ. Вӗсен ӑмӑрту договорӗн пункчӗсем кӗске те татӑклӑ: ӗҫ нормине кашни кун 200 процентран кая мар тултармалла, январь уйӑхӗнче планран ирттерсе пӗрер вагон юсамалла, кивӗ детальсемпе туллин усӑ курмалла. Бригадӑсем ӑмӑрту договорне пурнӑҫлама тытӑннӑ та ӗнтӗ. Январӗн 10-мӗшӗнчен пуҫласа февралӗн 23-мӗшчен стахановла вахтӑна тӑнӑ. Нумаях пулмасть Чесов юлташӑн бригади икӗ вагона кӑтартнӑ срокран 32 сехет малтан юсаса кӑларчӗ. Январӗн 15-мӗшӗнче вӑл смена хыҫҫӑн 4 сехет юлса ӗҫлерӗ, оборонӑллӑ задание вӑхӑтра пурнӑҫларӗ.

Фронтовой бригадӑсен ӗҫӗ пирки вагонсем юсакан цехри парторганизаци секретарӗ И. И. Шлапак юлташ ҫапла калать:

— Фронтри пек, вӑя шеллемесӗр, вӑхӑта пӗлмесӗр, калаҫса тӑмасӑр, ир пуҫласа ҫӗрлеччен ӗҫлеҫҫӗ вӗсем. Задание пурнӑҫламасӑр нихӑҫан та киле каймаҫҫӗ. Маттур ачасем, ӗҫри чӑн-чӑн гвардеецсем.

Т. ИВАНОВ.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔ

Малта пыракансен опычĕсемпе усă курмалла

КАНАШ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз вăрман хатĕрлес ĕçе çийĕнчех тытăннă. План тăрăх колхозăн вăрман хатĕрлевĕнче кунсерен лашаллисем 11 çын, çураннисем 9 çын ĕçлемелле.

Колхоз правленийĕ, вăрман хатĕрлевĕн планне кĕске срокра пурнăçлама кирлине шута илсе, вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме уйрăм бригада организациленĕ. Бригадăра—лашаллисем 18 çын, çуранннисем 13 çын. Бригадăна колхоз председателĕ Тихонов юлташ хăй ертсе пырать. Ку бригада 300 кубометр ытла йывăç касса хатĕрленĕ, 150 кубометр ытла турттарнă. Çапла вара колхоз хăйне панă плана касса хатĕрлессипе 40 процента яхăн, турттарассипе 30 процент ытла тултарнă.

Вăрман хатĕрлевĕнче лайăх ĕçлекен колхозсем татах та пур. Анчах хăшпĕр колхозсем ку тарана çитсе те çак енĕпе нимĕн те туман-ха. Сăмахран, «Самолет», «Молния», «Красноармеец» колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме пĕр çын та яман.

Калинин ячĕпе тăракан тата «Çĕнĕ пурнăç» колхозсем те сӳрĕккĕн ĕçлеççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз 7 кубометр кăна йывăç касса хатĕрленĕ, турттарас енĕпе нимĕн те туман.

Районĕпе илсен, вăрман хатĕрлевĕ вăрахăн пулса пырать. План тăрăх 1942 çулти пĕрремĕш кварталта 7 пин кубометр касса хатĕрлемелле тата 8 пин кубометр турттармалла. Январĕн 17-мĕш тĕлне 100 кубометра яхăн касса хатĕрленĕ, 500 кубометра яхăн кăна турттарнă.

План вăрахăн пурнăçа кĕрсе пыни колхозсемпе ялсоветсем вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ çителĕклĕ таран яманнинчен килет. Вăрман хатĕрлевĕнче районĕпе кунсерен 130 çын лашасемпе, 80 çын çуран ĕçлемелле. Анчах та, вăтамран илсен, иртнĕ кунсенче çуранннисем 46 çын, лашаллисем 25 çын çеç ĕçленĕ.

Уйрăмăнах вăрманта ĕçлекенсем хушшинче çирĕп дисциплина çуккине, ĕç кунĕпе туллин усă курманнине палăртмалла. Норма тăрăх кашни çынăн кунне 2,4 кубометр йывăç касса хатĕрлемелле, 1,2 кубометр турттармалла. Ку нормăна кашни тăрăшса ĕçлекен çын тултарма тата ирттерсе тултарма та пултарать. Анчах та вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсен ĕçтухăçлăхĕ ӳссе пымасть.

Ку ĕнтĕ ĕçре механизмсемпе туллин усă курманнинчен, инструментсене йĕркеллĕ тытманнинчен килет. Тепĕр енчен, чылай колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекенсене час-часах улăштарса тăраççĕ. Çакă вăл вăрман хатĕрлевĕн ĕçне питех те пысăк чăрмав кӳрет.

Тепĕр çитменлĕх вăл—лайăх ĕçлекенсен паха опычĕсемпе усă курманни тата вĕсен опытне ытти рабочисем хушшинче сарса пыманни пулса тăрать. Вăрманпромхозăн вăрман хатĕрлевĕнче кăтартуллăн ĕçлекенсем сахал мар. Акă, кадровăй рабочи И. Константинов юлташ юлашки 15 кун хушшинче 30 норма ытла тултарса, 320 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Вăрман касакан К. Матвеев юлташ 12 кун хушшинче 20,31 норма тунă, вăл кунсерен нормăна 169-шар процент тултарса пынă. Çавăн пекех М. Яргункин юлташ 12 кун хушшинче 24,16 ĕç норми тултарнă. Çапла 12 кун хушшинче вăл 422 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Вĕсен ĕçри ăнăçлăхĕ вăрман ĕçĕн технологине тĕплĕн пĕлнинче, мĕнпур машинăсемпе тата механизмсемпе çителĕклĕн усă курнинче, вăхăта шута илмесĕр ĕçлесе ĕç тухăçлăхне пĕрмай ӳстерсе пынинче пулса тăрать.

Вăрманта ĕçлекенсен çав паха примерсемпе усă курмалла. Пĕрремĕш кварталта вăрман хатĕрлевĕнче мĕнпур вăйпа ĕçлесе, задание пĕтĕмпех пурнăçламалла.

И. М.

Двухсотниксемпе ударниксем

Шупашкарти «Красный молот» артельри пур цехсем те 1941 çулти плана ытлашшипех тултарса, планран ытлашши 83.700 тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Тимĕрç цехĕ мирлĕ вăхăтра плана уйăхран уйăха тултарса пырайман пулсан, халĕ вăл сахал рабочисемпех, декабрь уйăхĕнчи задание 240 процент тултарса, малти вырăна тухрĕ.

Атă-пушмак çĕлекен цехри рабочисенчен кулленхи нормăна 150 процентран кая тултарса пыраканни пĕр çын та çук. Нумайĕшĕсем сменăри нормăна 200-шер процент тултарса пыраççĕ. Çавнашкал паха çитĕнӳсем тума вĕсене кирлĕ материалсене малтанах хатĕрлесе хуни, ĕçре пĕр-пĕрне пулăшса пыни, ĕç кунĕпе мĕн май килнĕ таранах туллин усă курни пулăшать.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланнă рабочисем 1942 çулта татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Слесарнăй цехри рабочисем январь уйăхĕнчи задание малтанхи çур уйăхрах 108 процент ытла тултарнă.

Сĕтел-пукансем тăвакан цехри стахановецсем Григорьев, Карпеев юлташсем сменăра 2-шер норма ытла тултарса пыраççĕ. Ытти цехсенчи стахановецсем те: Рыжов, Игнатьев, Азимов, Виноградов юлташсем сменăри нормăна 200-шер процент тултараççĕ.

Çĕвĕ çĕлекен цехри мастерсем Нестерова, Хабарова, Иванова, Новик юлташсем хăйсен пархатарлă ĕçĕсемпе двухсотниксен ретне тăма тивĕçлĕ пулчĕç. Артель коллективĕ Мускаври Сталин ячĕпе тăракан заводри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвне пухура сӳтсе явнă хыççăн рабочисем ĕç тухăçлăхне татах та ытларах ӳстерчĕç, пĕрремĕш квартал планне чылай ирттерсе тултарма пулчĕç.

Стахановец Степанов юлташ пухура çапла каларĕ:

— Эпĕ халĕ нормăна 180 процент тултарса ĕçлетĕп, малашне социализмлă ăмăртăва хутшăнса, куллен 2-шер норма тултарса пыма, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун тĕлне пĕрремĕш кварталти задание ытлашшипех пурнăçлама пулатăп,—терĕ.

Ун примерĕпе ытти рабочисем те нумайĕшĕсем хăйсем çине çавнашкал татăклă обязательствăсем илчĕç.

М. СМЕТАНИН.

Çĕршывпа фронтшăн

ШАХАСАН. Шуркассинчи «VIII Съезд Советов» промартельри рабочисене Совет Информаци Бюровĕн кашни ырă хыпарĕ ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерме хавхалантарать.

— Тăшмана хăвăртрах çапса çĕмĕрме Хĕрлĕ Çара пулăшас, çĕршыв обороннине тĕреклетес ĕçе эпĕ хамăн пĕтĕм вăя хуратăп. Иртнĕ вăхăтсенче эпĕ кулленхи нормăна 150 процент таран тултарса ĕçленĕ пулсан, малашне кулленхи нормăна 200—250 процент таран тултарса ĕçлетĕп,—тет артельри çĕвĕ çĕлекен стахановец К. Николаев юлташ.

Промартельри стахановецсем О. Егорова, А. Антонов юлташсем те малашне хăйсен ĕç нормисене 250—300 процент таран тултарса ĕçлеме пулчĕç.

Промартель членĕсем социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Кашни рабочи кулленхи нормăна 150 процентран кая мар тултарма обязательство илчĕ. Çавăн пекех промартелĕн çулталăкри планне кăçал 160 процентран кая мар тултарма пулчĕç.

Илнĕ обязательствăсене вĕсем кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Иртнĕ вăхăтсенче Егорова, Антонов, Николаев çĕвĕ çĕлекенсем ĕç нормине 150-шар процент таран тултарса ĕçленĕ пулсан, халĕ вĕсем кулленхи нормăна 220—250-шар процент тултарса пыма тытăнчĕç.

Промартель членĕсем çĕршывпа фронта вăй çитнĕ таран пулăшса пырассишĕн тăрăшаççĕ. Вĕсем промкооперации ячĕпе тăвакан танксен соединенийĕ валли виçĕ кунхи ĕç укçийĕсене тата 1941 çулти тупăшран артель членĕсене валеçсе памалли фондран 1640 тенкĕ пама кăмăл турĕç. Çавăн пекех унти кашни рабочиех «Комсомол Чувашии» бронепоезда тунă çĕре икшер кунхи ĕç укçисене панă.

«Пинер» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерӳллĕ ĕçĕсене чĕререн ырлаççĕ. Вĕсем, ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерсе, çĕршывпа фронта ытларах та ытларах пулăшса тăма сăмах параççĕ. Хăйсем пек хĕрӳллĕн ĕçлеме районри мĕн пур колхозсене тата колхозниксене чĕнсе çыру çырчĕç. Вĕсем хăйсен çырăвĕнче çапла каланă:

— Эпир оборона фондне çĕнĕрен 20 центнер тырă, 2,5 центнер аш-какай, 5 центнер пахча-çимĕçсем, 5 килограмм шăрантнă çу, 200 центнер утă, 30 центнер сĕлĕ улăмĕ патăмăр. Хамăр пек ĕçлесе пыма, çĕршывпа фронта сĕт-çу, аш-какай, тырă, пахча-çимĕçсем тата ыттине те ытларах пама районри мĕн пур колхозсемпе колхозниксене чĕнетпĕр,—тенĕ.

Районри колхозсемпе колхозниксем, «Пинер» колхоз членĕсен чĕнĕвне сӳтсе-явса, ăна ырларĕç. Халĕ вĕсен чĕнĕвне пурнăça кĕртме обязательствăсем илчĕç.

Шуркасси ялсоветне кĕрекен «Майăн 1-мĕшĕ», Чулкăмака ялсоветĕнчи «Память Ильича» колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе, государство умĕнчи обязательствăсене парса татрĕç. «Новая жизнь» колхоз 1942 çулшăн та аш-какай 100 процентĕпех парса татрĕ. Ку колхозра колхозниксем те хăйсен 1941 çулти пур обязательствисене те ытлашшипех тултарса, 1942 çулшăн та аш-какай, сĕт-çу парса татнă.

В. ЯКОВЛЕВ.

Канашри железнодорожниксем

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче Канаш станцинчи железнодорожниксем пурте фронта ытларах пулăшас, тăшмана çĕнтерме кирлине пурне те тăвас ĕмĕтпе ĕçлеççĕ. Вĕсем чугунçул транспорчĕ вăрçă кунĕсенче пĕр кăлтăксăр ĕçлеме тивĕçлине лайăх ăнланаççĕ. Кунта тăван çĕршыва чĕререн парăнса, хăйсене фронтри чăн-чăн боецсем пек шутласа ĕçлекен рабочисене вуншарăн илсе кăтартма пулать.

Уйрăмăнах машинистсем хушшинче производствăллă пысăк çĕклен пурри палăрать. Вĕсем поездсене хăвăрт çӳретес, çар грузĕсене срокра илсе çитерес тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çапла, Назаров, Тимофеев машинистсем йывăр составлă поездсене илсе çӳремелли техникăллă хăвăртлăха яланах ирттерсе тултараççĕ. Бодеев, Федорин, Крестников, Тигелев тата ытти машинистсем çĕршыври чаплă машинист Лунин меслечĕпе усă кураççĕ. Вĕсем йывăр составлă поездсене нормăпа пăхнинчен чылай хăвăртрах çӳретеççĕ. Паровозсене яланах юсавлă тытаççĕ. Çавна пула вĕсем паровоза пĕрре юсанипе 4500 километр чупас вырăнне 5300 километр ытла чупаççĕ. Орденоносец Корчмарев, Николаев, Моруков машинистсем ертсе пыракан бригадăсем паровозсене яланах кăтартуллă тытаççĕ. Кашни уйăхрах 4 пин тенкĕлĕх ытла топливо перекетлеççĕ. Кунпа пĕрлех вĕсем икĕ пин тонна ытла туртакан йывăр составлă поездсене юсава кĕртмесĕрех 5 пин километр ытла илсе каяççĕ.

Çавăн пекех смена дежурнăйĕ коммунист Алимов юлташ та кăтартуллăн ĕçлет. Вăл поездсене вăхăтра йышăнса илет, вăхăтра ăсатать. Çапла вара Алимов юлташ çывăхри станцисем хушшинче поездсене пĕр чарăнусăр çӳреме май туса парать.

Чылай железнодорожниксем çĕнĕ профессисене вĕренсе алла илеççĕ. 5-мĕш дистанцире ĕçлекен коммунист А. Андреев юлташ халиччен маляр пулса ĕçленĕ пулсан, халĕ печник тата стекольщик пулса ĕçлет. Нормăна 400 процентран кая мар тултарать. Çакăншăн ăна «Отличнику трудового фронта» аттестатпа наградăланă.

Юсав ĕçĕнче ĕçлекенсем Егорова, Якимова юлташсем бригадир ĕçне вĕреннĕ. Халĕ вĕсем татах тепĕр профессие—çул мастерĕсем пулма вĕренеççĕ.

Çавăн пекех маляр Матвеев юлташ та темиçе профессипе те ĕçлет.

Депора стахановец-двухсотниксен йышĕ ӳссех пырать. Маклаков, Семашкин, Феклин тимĕрçĕсем икшер норма ытла тултараççĕ. Павловпа Филиппов электросварщиксем те кунсерен икшер норма тăваççĕ. Слесарь Андрианов юлташ, ăна ЧАССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ производствăра пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Хисеплĕ грамотăпа наградăланă хыççăн, ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерчĕ. Халĕ вăл ĕç нормине 250 процентран кая мар тултарать.

Уйрăмăнах çамрăк железнодорожниксен пуçарулăхне палăртмалла. Нумаях пулмасть депори комсомолецсемпе çамрăксем паровозсене юсас тĕлĕшпе фронтовой бригада организациленĕ. Çак бригада, комсомолец Черкасов юлташ ертсе пынипе, январĕн 9-мĕшĕнче пĕр паровоза 10 сехет хушшинче, срокчен 14 сехет малтан, юсаса кăларнă. Çамрăксен бригадин паха ĕçне Хусан чугунçулĕн управленийĕ пысăккăн хакласа тав тунă. Çакăн хыççăн бригада тата тепĕр вагона срокченех юсаса кăларнă.

Железнодорожниксем Сталин юлташ фронта ĕçлĕн те активлăн пулăшма чĕнсе каланине стахановла ĕçпе çеç мар, ытти майсемпе те анлăн пурнăçлаççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсемшĕн тимлĕн тăрăшаççĕ. Сăмахран, вĕсем боецсем валли 66 тир, 19 мăшăр перчатка, 11 мăшăр носки, 31 мулаххай, 13 килограмм çăм тата ытти япаласем те панă.

Çак кунсенче железнодорожниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли походнăй мунча тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе пуçарса ячĕç. Ку укçана воскресниксем туса пухаççĕ. Паянхи куна 4 воскресник туса 1.546 тенкĕ пухнă.

Юлашки кунсенче железнодорожниксем тепĕр паха ĕç—колхозсемпе чугунçул транспорчĕ хушшинче пĕр-пĕрне социализмлă пулăшу парассине пуçарса ячĕç. Суракине хатĕрленсе çитме депора ĕçлекенсем 7 колхоза, 5-мĕш дистанцире ĕçлекенсем 6 колхоза тата вагонниксем икĕ колхоза ялхуçалăх машинисене юсаса параççĕ. Ялхуçалăх машинисене юсама колхозсене специалистсем ярса параççĕ.

Колхозсем, железнодорожниксен пулăшăвĕ çине ответлесе, чугунçул транспортне хĕлле юр хырса, çуркунне çурхи шыва уçса ярса пулăшаççĕ. Çак кунсенче Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чугунçул транспортне пулăшас шутпа 2.650 щит куçарса лартрĕç. 1400 тăваткăл метр çинче капланнă юра хырса тасатрĕç. М. Горький ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 2650 щит куçарса лартрĕç тата 34.670 тăваткăл метр çинче юр хырса тасатрĕç.

И. МАЛОВ.

Коммунистсем ĕçре малта пыраççĕ

Сĕнтĕрвăрринчи «Портной» артельре ĕçлекен коммунистсем хăйсем çĕршыва, фронта ытларах продукци туса парассишĕн кĕрешеççĕ. Партин пуçламĕш организацийĕн секретарĕ Т. Сорокина юлташ производствăра хăйĕн ĕç нормине уйăхран уйăха 200 — 220-шер процент тултарса ĕçлет. Коммунистка М. Борзова юлташăн бригади кашни уйăхри плана çĕр процентран ытла ирттерсе пурнăçласа пырать. Артель председателĕ коммунист П. Муравьев юлташ производство ĕçне тимлĕн ертсе пырать, кашни заказа хăвăрт пурнăçлассишĕн тăрăшать.

Производствăра пуçаруллăн, тимлĕн ĕçленипе коммунистсем артельри рабочисене ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ. Артель иртнĕ çулти декабрь уйăхĕн планне 106 процент ытла тултарчĕ, çулталăк планне 116 процент тултарса, государствăна 1940 çултинчен нумайрах продукци пачĕ. Коммунистсен ĕçри паха тĕслĕхĕ артельре ĕçлекен ытти рабочисем хушшинче анлăн сарăлса пырать.

Сорокина, Китаева работницăсем ĕç нормине куллен 200-шер процент тултарса ĕçлеççĕ, Труденова, Лебедева юлташсем те ĕç нормине куллен 150—160-шар процент тултараççĕ.

Г. Р.

Васкавлă заказсене вăхăтра пурнăçлаççĕ

КУКЕÇ. Районри промартельсем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетрĕç. Артель членĕсем фронт валли нумайрах продукци парассишĕн вăхăта шутламасăр, вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Шăнкасри «Правда» промартель çулталăкри производствăллă плана ытлашшипех тултарчĕ. Артельри рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янипе пула ĕç тухăçлăхĕпе продукци пахалăхĕ кунран-кун ӳссе пырать. Стахановецсемпе двухсотниксен йышĕ хутшăнать. Артель заказсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса кăларассишĕн уйрăмăнах çине тăрса кĕрешет. Хĕрлĕ Çар валли тир тумалли заказа артель 163 процент тултарнă. Тир тăвакан цехри рабочисем заказ илнĕ хыççăн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Г. Степанов ĕç нормине 213 проц., С. Семенов 209 проц., Ф. Семенов 180 проц., сăран тăвакан цехри Наринский 300 процент, Ефимов—255 процент тултарса пынă. Çавăн пекех артель Хĕрлĕ Çар валли 200 мăшăр çăматă йăваласа панă, 3.500 мăшăр сăран алсатулĕ тата ытти япаласем те кĕске срокрах çĕлесе панă.

Хальхи вăхăтра артельре вырăнти чĕртаварсенчен куллен кирлĕ таварсем вырăнтах туса кăларассине пысăк вырăна хурса, çĕнĕ продукцисем тума тытăннă. Сăмахран, малтанхи вăхăтра подош тумалли полувалсене аякран кӳрсе килнĕ пулсан, халĕ вырăнтах тăваççĕ. Çак çĕнĕ продукцие 3.600 тенкĕлĕх туса кăларнă та ĕнтĕ, унăн пахалăхĕ те начар мар. Çавăн пекех артель, шĕвĕ супăнь тăвас ĕçе пуçарса, ăна 1.500 килограмм туса кăларчĕ. Кунсăр пуçне артель продукци кăларнă çĕрте дефицитлă таварсем вырăнне вырăнти чĕртаварсемпе ăнăçлăн усă курать. Малтанхи вăхăтра сăран тунă çĕрте çăнăх расходланă пулсан, халĕ çăнăхсăрах сăран тăваççĕ. Çак ĕçе сăнамалла 2.980 тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Продукци пахалăхĕ çăнăхпа тунинчен пĕре те кая мар. Çак мероприятие туса ирттерни продукцин хăйне лараkан хакне 40 процент йӳнетет, тавар та хăвăртрах пулать. Çав çĕнĕ пуçарусемпе артель 1942 çулта туллин усă курма шутлать.

Артель членĕсем хушшинче массăллă-ăнлантарулă ĕçе те лайăх организациленĕ. Кунта политинформацисемпе калаçусем пулаççĕ, час-часах коллективлăн радио итлеççĕ. Пушă вăхăтра рабочисемпе работницăсем çар ĕçне вĕренеççĕ. Чылайĕшĕсем ПВХО значокĕн нормине панă, вăрçă ĕçне 110 сехетлĕ программа тăрăх вĕренсе тухнă.

Инвалидсен Кӳкеçри артелĕ иртнĕ çулсенче юлса пынă пулсан, 1941 çулта хăйĕн ĕçне урăхлатса, çулталăк планне ытлашшипех тултарчĕ. Уйрăмăнах çĕвĕ çĕлекен цех лайăх ĕçленине палăртмалла. Цех Хĕрлĕ Çар валли япаласем çĕлемелли заказа илсенех иртнĕ уйăхсенчен темиçе хут лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕ, çулталăкри производствăллă плана 9 хут ирттерсе тултарчĕ.

Лапсарти промартель те çулталăкри производствăллă плана ытлашшипех тултарнă. Таварăн хăйне лараkан хакне 1,6 процент йӳнетнĕ. 62 çулти К. Афанасьев юлташ артельре 1926 çултанпа ĕçлет. Вăл ытти рабочисене лайăх пример кăтартса пырать. Ватă пулсан та, вăл юлашки вăхăтра кулленхи нормăна 200 процент таран тултарса пырать. Ăна лайăх ĕçленĕшĕн «Отличник промкооперации» значок парса наградăланă.

Çĕнъял-Уйкассинчи промартель çулталăк планĕнчен ирттерсе 88.000 тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Артельре ĕç дисциплини çирĕп. 1941 çулта дисциплинăна пăсакансем пĕр çын та пулман. Артельри рабочисен пĕр пайĕ Хĕрлĕ Çара тухса кайнишĕн ĕç чарăнса тăмасть. Вĕсем вырăнне çĕнĕ рабочисем пыраççĕ. Пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ Кузьмин фронта кайсан, унăн арăмĕ Х. Семенова хăй упăшки вырăнне тăчĕ. Вăл упăшкинчен кая мар ĕçлет.

Хочахматри инвалидсен артелĕнче 1941 çулччен кустарьсем ĕçленĕ, вĕсен ĕçне йĕркеллĕн шута илсе те пыман. Халĕ кунта йăлтах урăхла. Артель членĕсем ĕçре ывăнма пĕлмеççĕ. Вĕсем боецсем валли ăшă тумтирсем, кĕпейĕмсем тата ытти япаласем те сахал мар çĕлеççĕ. Митрофанова, Михайлова, Никитина юлташсем нормăпа 8 кĕпе çĕлемелле пулсан, 10—12-шер кĕпе çĕлеççĕ.

Районри артельсем 1942 çулта хăйсен производствине планпа пăхнинчен ытларах сарма палăртнă. Сăмахран, Заводская ялĕнчи обозостроительнăй артель планран ирттерсе 300 мăшăр йĕлтĕр, катка-пичке тавраш сем, урапа тума палăртнă. Паçпак тата Шуркка артелĕсем — кирпĕч, Чăрăшкасси, Лапсар, Çĕнъял, Упакасси артелĕсем—çунасемпе урапасем, Тĕкĕрçри артель — колхозсем валли çатансем тăвас ĕçе сарма палăртнă.

Т. ЛОГИНОВ.

ВОЕНКОМАТСЕМ ÇУМĔНЧИ ВСЕВОБУЧ ИНСТРУКТОРĔСЕНЕ ПУЛĂШМА

Всевобуч йĕркипе командирсене вĕрентес ĕçе мĕнле организацилемелле

«Нимĕç захватчикĕсем ултавлăн тапăнса пире ирĕксĕрех вăрçа туртса кĕртни пирĕн çĕршывшăн хăрушлăх туса хучĕ. Малтанхи хут çапнă хыççăнах пирĕн çар саланса каясса, пирĕн çĕршыв чĕркуçленсе тăрасса тăшман шанса тăнă. Анчах тăшман питех те пысăк йăнăш турĕ». (И. СТАЛИН).

Ленинăн—Сталинăн аслă ĕçне чĕререн парăннă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотĕн вуншар миллион боецĕсем хамăрăн юратнă тăван çĕршыва хӳтĕлеме паттăррăн та хăюллăн тăчĕç. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче пирĕн боецсемпе командирсем тата политработниксем геройла çĕнтерӳсем туса чапа тухрĕç.

Тылра çар резервĕсем миллионшарăн хатĕрленеççĕ. Хĕçпăшал тытма пултаракан кашни çын çĕршыва нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларассишĕн çапăçакансен ретне тăма хатĕрленет. Рабочисем, колхозниксем, служащисем тата шкулсенче вĕренекен çамрăксем пысăк тимлĕхпе çар ĕçне вĕренеççĕ.

Пирĕн юратнă çулпуç тата аслă полководец Сталин юлташ «пирĕн тăван çĕршыв территорийĕ çине унăн оккупанчĕсем пулса сĕмсĕрленсе кĕнĕ нимĕçсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, пĕтерсе тăкма» чĕнни всевобуч боецĕсемпе шкулсенче вĕренекен çамрăксене çар ĕçне татах та тимлĕнрех вĕренме хавхалантарать.

Запасри командирсене, вĕренӳ заведенийĕсенчи çар ĕçне вĕрентекен руководительсене Хĕрлĕ Çарăн боевой резервне хатĕрлес хисеплĕ те ответлă ĕç шанса панă.

Боецсене пысăк пахалăхлă пĕлӳпе хăнăху парас тесен, командирăн чи малтан хăйĕн нумай пĕлни кирлĕ. Çакăнпа пĕрлех, кашни боецăн пултарулăхне ӳстерес тесен, командирăн вĕренӳ материалне, вăхăтпа вăя нумай сая ямасăр, отлично ăнлантарса пама пĕлни кирлĕ. Тата кашни занятие вĕренӳ тата нагляднăй пособисемпе усă курса ирттерме пĕлмелле, тема питĕ йывăр е сложнăй пулсан та, ăна кашни ăнланса илтĕр, заняти кашнинишĕн интереслă пултăр. Çак паллă условисене пурнăçлама военкоматсен командирсене пухса инструктивнăй занятисем тăтăшах туса ирттермелле.

Запасри команднăй составпа тата çар ĕçне вĕрентекен руководительсемпе ирттерекен занятисенче правилăн содержанийĕ çинчен, ăна йĕркелесси пирки тата вĕренмелли майсем çинчен астутарни кирлĕ, мĕншĕн тесен çак майсем командирсене занятисем ирттерме пысăк пулăшу параççĕ.

Командирсен занятийĕсене ирттерме запасри командирсенчен е вĕренӳ заведенийĕсенче çар ĕçне вĕрентекен руководительсенчен хăйсенченех ĕçе лайăхрах пĕлекен методистсене уйăрмалла.

Командирсемпе заняти ирттерме хатĕрленнĕ чух мĕне тата мĕнле вĕрентесси çинчен тĕплĕн шухăшлани кирлĕ. Занятире ăнланма йывăртарах темăсене тĕплĕнрех сӳтсе-явмалла, çав темăсем тăрăх боецсене вĕрентмелли меслетсене пăхса тухмалла. Вĕрентнĕ тухне ĕçе мĕнле тумаллине наглядно кăтартса памалли меслетпе усă курмалла.

Руководителĕн командирсемпе занятие ирттернĕ чухне çаксене шута илмелле:

а) программăри темăсене йĕркеллĕ вĕрентсе пĕтересси;

б) çар ĕçне вĕренмелли япаласене тĕрĕс те тирпейлĕ тыткаласси;

в) хĕçпăшалăн, приборсен пайĕсене отлично вĕренсе çитесси тата вĕсемпе практикăра та усă курма вĕрентесси;

г) занятие çакăн пек йĕркелесси: паян сӳтсе-явакан темăна унччен хи темăпа çыхăнтармалла; иртнĕ урокра илнĕ пĕлĕве манăçтармалла мар, ăна çирĕплетсе пымалла, вĕренӳ вăхăтне пĕр минута та сая ямалла мар.

Занятие методика тĕлĕшпе çакăн пек йĕркелемелле: вĕрентекенĕн хăй умне уçăмлă тĕллев лартмалла, вĕрентес темăна унăн хăйĕн лайăх пĕлсе тăмалла.

Занятисем руководитель темăн тĕллевĕпе пĕлтерĕшĕ çинчен тата урока епле майпа ирттересси çинчен каласа кăтартнипе пуçланаççĕ.

Командирсем умри занятисене ирттерме теори енчен хатĕрленсе çитнине тĕрĕсленĕ хыççăн, ăнланман ыйтусене ăнлантарнă хыççăн, уставри паллă положенисене пурте пĕр пек ăнланнине палăртнă хыççăн, руководитель командирсене Хĕрлĕ Çарăн Уставĕ пирки çырнă статьясене вулама сĕнет тата çавăн пекех боецсене вĕрентнĕ чухне ăнлантарса пама кирлĕ хаçатсемпе журналсенчи материалсемпе усă курма хушать, вĕренӳ ĕçне практикăпа çыхăнтарма кирлине, урока çар ĕçне вĕренекенсемшĕн мĕнле ирттерме кирлине кăтартса парать.

Тĕслĕхрен, черетлĕ занятисен расписанийĕ тăрăх командирсен всевобуч боецĕсене «гранатăсемпе вут хыптаракан шĕвек тултарнă бутылкăсене ывăтас» ĕçе вĕрентмелле пултăр. Заняти вĕренме кирлĕ пек хатĕрлесе çитернĕ вырăнта, окоп пек (пĕрерĕн те, нумайшарăн та вырнаçтармалăх) чавнă çĕр лаптăкĕ çинче, канав пур вырăнта, çапăçу хирĕнче тĕл пулакан çурт, йывăç, тĕмĕ пур вырăнта пулса иртет. Кунтах танк макечĕсем е фанер хăми çине ӳкерлĕ танк ӳкерчĕкĕсем пур. Кунтах танкăн сиенленме пултаракан вырăнĕсене паллă тумалла. «Фашист танкĕсене хирĕç мĕнле кĕрешмелле» ятлă плакат, вĕренмелли гранатăсем тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем те кирлĕ таран пулмалла унта. Вĕренекенсенчен заняти умĕн уйăрнă 2—3 помощник занятире хăйсене панă функцисене çирĕппĕн пурнăçа кĕртеççĕ. Пĕрремĕш помощник—боец, малтанхи занятире гранатăн материальнăй чаçне лайăх вĕренсе ăнланнăскер, 5—6 боецпа гранатăн пайĕсемпе тĕплĕн паллашас тĕлĕшпе ĕçлет. Иккĕмĕш помощник—сывлăх енĕпе тĕреклĕскер тата çаврăнăçуллăскер, гранатăсене пур положенисенчен те тата пытанса выртнă вырăнсенчен те ывăтма вĕрентет. Командир хăй гранатăна аякка, тĕрĕ ывăтма вĕрентет.

Командир тата унăн иккĕмĕш помощникĕ 5—6 çынран тăракан группăсене вĕрентеççĕ. Çапла майпа 15 — 18 çын пурте пĕр вăхăтрах пур ĕçе те тăваççĕ. 15—18-шар минута хушши вĕренсе вĕсем пĕр сехет хушшинче гранатăна пур положенисенчен те тата хӳтĕлĕхрен те ывăтма вĕренсе çитеççĕ, çавăн пекех гранатăн материальнăй чаçне тепĕр хут аса илсе тухаççĕ. Кану вăхăтĕнче командир пирĕн мухтавлă боецсем фронтра фашистсен танкĕсене гранатăсемпе аркатаа-аркатаа тăкни çинчен, фашистла бандитсен экипажĕсене çунтаракан шĕвек япаласемпе çунтара-çунтара яни çинчен, пирĕн снайперсем тăшман танкĕсене танк водителĕ пăхса пыракан хупăксенчен пере-пере сиенлени çинчен интересленсе итлемелле каласа кăтартать.

Занятин иккĕмĕш сехетĕнче руководитель командирсем гранатăсене ывăтмалли майсем çинчен тата çунтаракан шĕвек тултарнă бутылкăсене пемелли майсем çинчен мĕнле ăнланнине тĕрĕслет.

Юлашкинчен руководитель хăй ирттернĕ заняти çинчен тепĕр хут кĕскен каласа парать. Командирсен боецсене вĕрентнĕ чухне çак ыйтусене çутатса пама кирлине асăрхаттарать:

а) вĕренекенсен иртнĕ урокра вĕреннĕ ыйтусем çине ответ памалла, вĕренӳ тĕллевĕ пирки каласа ăнлантармалла.

б) вĕренекенсем занятие мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухмалла;

в) вĕренӳ материалĕсене мĕнле ăнланнине шута илмелле;

г) вĕренӳ задачине мĕнле пурнăçлани çинчен палăртмалла;

д) япăхрах ăнланнă ыйтусене тепĕр хут ăнлантарса памалла;

е) социализмлă ăмăртăвăн результачĕсене (лайăх вĕренекенсене тата ĕлкĕрсе пырайманнисене) кăтартса памалла);

ж) çитес занятири темăна кăтартса памалла;

з) çитес занятисене пысăк пахалăхпа ирттерес тесен, мĕн тума кирли çинчен, мĕн вуламалли çинчен тата иртнĕ темăна вуласа асра тытма кирли çинчен каласа ăнлантармалла.

Руководитель командирсене занятисене кăйсен мĕнле хатĕрленсе ирттермелли çинчен, урока мĕнле йĕркепе организацилемелли çинчен, занятисем ирттернĕ вăхăтра хăйсем тунă йăнăшсене хăйсенех асăрхаса тӳрлетме кирли çинчен тата йăнăшсемпе çитменлĕхсем ан пулччăр тесен мĕнле вĕрентме кирли çинчен каласа кăтартать.

Çапла йĕркеллĕ те тимлĕн ĕçлесен, вĕренӳ пахалăхĕшĕн кĕрешсе пырсан, кашни руководитель программăри кашни темăпа вĕрентекен командирсен группине хатĕрлесе çитерет; командирсем вара инструкторски занятисенче илнĕ опытпа усă курса, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарăн пысăк пахалăхлă боевой резервĕсене вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Полковник А. БУСЯЦКИЙ.

ХĔРЛĔ ÇАРĂН ÇĔНТЕРĔВĔÇЕМ ÇИНЧЕН ЮТÇĔРШЫВ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 25-мĕш. (ТАСС). Совет Информаци Бюровĕ Çурçĕр-Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенчи çарсен пысăк çĕнтерĕвĕ çинчен пĕлтерни Лондонри халăха пит те вăйлăн хавхалантарать. Англи пичечĕ çак çĕнтерӳ çинчен нумай çырать.

Рейтер агентстви çапла çырать: Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвне Лондонри авторитетлă çынсем хушшинче пысăк хак параççĕ. «Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе малалла куçса пыракан район, тесе çырать агентство,—питĕ анлă, нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă территори аслансах пырать».

Оккупациленĕ районсенче нимĕçсем мĕнле террор туса пыни çинче чарăнса тăрса, агентство çапла пĕлтерет: «Нимĕçсем халăхран ăшă тумтир туртса илнипе ниçта та çырлахман. Нимĕçсенчен ирĕке кăларнă кашни пунктра совет войскисем тем чухлĕ виселицăсем, тем чухлĕ арçын е хĕрарăм виллисем тупаççĕ. Çав çынсен пĕтĕм «айăпĕ» те вĕсем хăйсен тăван çĕршывне чунтан парăнса тăни кăна пулнă, нимĕçсем вĕсене пĕр çавăншăн кăна вĕлернĕ. Войскăсемпе совет влаçĕн органĕсем халĕ ирĕке кăларнă районсенчи халăха васкавлă пулăшу параççĕ».

«Дейли телеграф энд морнинг пост» Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлтерекен хыпара çапла заголовок парса пичетленĕ: «Вырăссен çĕнĕ пысăк наступленийĕ. Анлă фронт талккăшĕпе 60 миля куçса кĕнĕ. Халăх пурăнакан нумай пунктсене ирĕке кăларнă. Гитлеровецсене 17.000 çынна вĕлерсе тăкнă».

«Дейли экспресс» хаçатăн заголовокĕ çакăн пек: «Тата 60 миля. Вырăс çарĕсем малалла ыткăнаççĕ». «Дейли мэйл» хаçат çапла çырать: «Хĕрлĕ Çар пĕр чарăнми Хĕвеланăçнелле ыткăнать. 6 хула ирĕке кăларнă. Питĕ кирлĕ чугунçул линине татнă».

Совет Информаци Бюровĕ пĕлтерни çинчен панă передачăра Англири радио çакна паллă тунă: Хĕрлĕ Çар çарĕсем çĕнĕ пысăк çĕнтерӳсем тунă. «Юлашки 13 кун хушшинче,—тенĕ Лондонран панă радиопередачăра, —вырăссем 100 километр ытла малалла куçнă, халăх пурăнакан 2.000 пункта ирĕке кăларнă. Германи войскисен 17.000 çын вилсе юлнă. Ку вăл вырăс çарĕсен пысăк çитĕнĕвĕ. Паян эпир Германири радио пур заявленийĕсем те мĕнтери суя халлапсем пулнине пит те лайăх куртăмăр. Халĕ Германи салтакĕсем пинĕ-пинĕпе вырăссен çивĕ хирĕсенче ĕмĕр вăранми ыйхăпа çывăраççĕ».

ЧЕРЧИЛЛЬ ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИНЧЕ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Англин общинăсен палатин ларăвĕнче лейборист Лоуренс палата малалла мĕнле кун йĕркипе ĕçлесси çинчен ыйтнине хирĕç Черчилль: часах пĕтĕм вăрçă ĕçĕсен мĕнпур лару-тăрăвĕ пирки пренисем пуçланмалла, ку прениçем виçĕ куна пымалла, тесе пĕлтернĕ. Çакănпа пĕрлех Черчилль Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи вăрçă ĕçĕсем пирки шикленекенсемпе тата çак вăрçă мĕнпе вĕçленесси çине шанса тăракансемпе эпĕ хам та килĕшетĕп, тесе пĕлтернĕ. «Пренире правительство политики тĕлĕшпе иккĕленесси тухса тăрсан, пренисен иккĕмĕш е виççĕмĕш кунĕнче эпĕ палата правительствăна шаннипе шанманни çинчен ыйту лартатăп»,—тенĕ Черчилль.

Черчилль общинăсен палатинче çапла каланине пула Англири хаçатсем нумай сӳтсе-явса çыраççĕ. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Дэйли мейл» хаçат çапла каласа çырнă: правительство ĕçĕсем тĕлĕшпе палăрнă пур иккĕленӳсем пирки те Черчилль правительствăна шаннипе шанманни çинчен ыйту лартма шухăшлать пулсан, премьер-министр палатăра пуçланмалли пренисем пит те хĕрӳллĕн иртессе кĕтнине пĕлтерет, тенĕ. «Манчестер гардиен» хаçат, Черчилль палатăра правительствăна шаннипе шанманни çинчен ыйту лартса, пĕтĕм правительство членĕсене коллективлăн ответ тытмалла тунипе килĕшмесĕр, Черчилль заявленине хирĕç çырать.—«Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи ĕçсем ăнăçсăр пынă пирки тата хамăрăн хĕçпăшал производствин хăвăртлăхĕсем çителĕксĕр пулнă пирки халăх хушшинче ӳпкелешнине, ку тĕлĕшпе кирек кам айăплă пулсан та, сирсе яма кирлĕ», тесе çырать çав хаçат.

Рейтер агентствин политикăллă ĕçсен обозревателĕ çапла çырать: «Палатăри прениpe сӳтсе-явмалли ыйтусем питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине Англи правительстви лайăх ăнланать, çавăнпа та вăл хăйне палата шаннипе шанманни пирки ыйту лартма кирлĕ тесе шутлать, çак майпа правительство хăй тĕллевĕсемпе шухăшĕсем пирки Англире тата ытти çĕршывсенче те иккĕленсе тăнисене сирсе яма пултарать».

Япони парламенчĕн сессийĕ

ТОКИО, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Япони парламенчĕн çессийĕнче паян премьер-министр Тодзио сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл вăрçă вăхăтĕнче Япони мĕн-мĕн тума шутлани çинче чарĕнса тăнă. Япони чи малтан «Хĕвелтухăç Азин стратегиллĕ базисемпе паха ресурсĕсене контроль лесе тăма, çапла май вара хăйĕн çар вăйне ӳстерсе пыма, Германипе тата Италипе туслă пурăнса пысăк операцисем туса иртterme, США-па Британи империне хирĕç вĕсене чĕркуçлентерсе лартачченех çапăçма шутлать», тенĕ вăл.

Тодзио хăйĕн сăмахĕнче: «США-па Британи империйĕн пĕрлешӳллĕ вăйне, уйрăмăнах вĕсен материальнăй ресурсĕсемпе пуянлăхне хакламанни йăнăш пулнă пулĕччĕ», тесе асăрхаттарнă. «Çавăнпа та ку вăрçă вăраха пырать», тесе пĕлтернĕ. Юлашкинчен Тодзио çак вăраха тăсăлакан вăрçа туса пыма Япони правительстви хăйĕн çар вăйне тĕреклетес тĕлĕшпе туса иртterme палăртнă ĕçсем çинчен каласа панă.

Çак ларурах ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Того сăмах тухса каланă. Японипе Германи тата Итали хушшинчи пĕрлĕхлĕ фронт çирĕпленсе пырать, çав союзлă виçĕ державăн туслăхĕ çар, дипломати, экономика тата ытти енĕпе те уйрăм форма йышăнса тăрать, тесе паллă тунă вăл.

«Японипе Совет Союзĕ хушшинчи отношенисем тĕлĕшпе ку вăхăтра ниепле улшăнусем те пулман,—тенĕ Того.— Вĕсен хушшинчи отношенисем нейтралитет çинчен тунă пакт тăрăх пулса пыраççĕ. Совет Союзĕ Америкăпа тата Англипе иртterekен калаçусем пирки сӳрекен тĕрлĕ сăмахсем Японипе Совет Союзĕ хушшинчи отношенисене нимĕн чухлĕ те тивмелле мар, Совет Союзĕпе Япони хушшинчи отношенисем пĕрпĕрин хушшинче нейтралитет тытса пырасси çинчен тунă пакт тăрăх пулса пымалла, тенĕ вăл.

Того «Япония Кăнтăр Америкăри тата Европăри нейтральнăй державăсемпе лайăх отношенире пурăнма шутлани» çинчен пĕлтернĕ. Анчах та Того çавăнтах «Рио де Жанейрăра халĕ пыракан конференцин ĕçĕсене Япони правительстви тимлĕн сăнаса пырать, тесе пĕлтернĕ.

Çар валли кирлĕ производство вăйлăн ӳсет

ВАШИНГТОН, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Резервсен федеральнăй управленийĕ çапла пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар валли кирлĕ производстви декабрьпе январĕн малтанхи çурринче ӳссе пынă. Машиностроительнăй заводсен продукцине кăларасси уйрăмах вăйлăн ӳссе кайнă. Тимĕр, хурçă тата тĕслĕ металсен производстви малтанхи шайпах пынă. Строительнăй промышленноçра та пысăк хускану палăрнă. Пĕтĕм промышленность производствин индексĕ декабрьте 168 çитнĕ, 1940 çулти ноябрьте вăл 160 кăтартнă, 1940 çулти декабрьте 139 кăна пулнă.

Болгария пĕтĕмĕшпех Германи аллине кĕрсе ӳкнĕ

НЬЮ-ИОРК, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). «Нью-Иорк таймс» хаçатăн Иерусалимри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн дипломатиллĕ миссийĕн составĕнче тăракан икĕ паллă çын София хулинчен Иерусалима килнĕ хыççăн çапла каласа кăтартнă: гестапо тата Германи çарĕ Болгарие пĕтĕмĕшпех контрольлесе тăраççĕ. Апла пулин те, Болгарире мĕн пурĕ те правительствăна çывăх тăракансем кăна Германи майлă тăраççĕ. Халăх хушшинче Российйăна кăмăллас туйăм вăйланса пырать. Халăхăн пысăк пайĕ Германие хирĕçле саботажсем тăвас ĕçе пулăшса тăрать, поездсене ӳпĕнтерес ĕçе, пушарсем тăвас ĕçе, телефонпа телеграф проводĕсене пăсас ĕçе т. ыт. те хутшăнать. Болгарире Германи çарĕсене нумайлатаççĕ. София хулинче Германи разведкин штабĕ вырнаçнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: юлашки 24 сехет хушшинче Батаан çурутравĕ çинче (Лусон утравĕ) хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Япони войскисем патне пысăк пулăшу пырса çитнĕ. Апла пулсан та, японецсем тунă атакăсене пурне те сирсе янă, японецсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Халĕ палăрма пуçланă тăрăх, Япони войскисем нумайччен хĕсĕ тăрас тактикăпа пăхăнса вăрçаççĕ. Вĕсем пысăк çухатусем тӳснине пăхмасçĕ, мĕншĕн тесен вĕсен кунта çынсен хисепĕ нумай ытларах, çавна курэ вĕсем американецсемпе филиппинецсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкма шутлаççĕ.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Англин Сингапурти командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Малайăн Хĕвелтухăç пайĕнчи фронтĕнче нимĕнле улшăнусем те пулман. Çапăçусем Бату-Пахат районĕнче пыраççĕ. Японецсен темиçе танкне пĕтерсе тăкнă.

Январĕн 23-мĕшĕнче çĕрле Англи авиацийĕ Манилăран кăнтăралларах противникăн войскисене тата транспорт колоннисене атакăланă. Темиçе бомба çул çинчи автомашинăсем çине ӳкнĕ. Нумай автомашинăсем çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Çавăн пекех противника пулеметсенчен те пенĕ. Самолетсем пурте хăйсен базисене лайăх таврăннă.

Адмиралтейство кăларнă коммюникере çапла каланă: Инçетри Хĕвелтухăç шывĕсенче çӳрекен Англи карапĕ японецсен подводнăй лодкине путарнă.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: юлашки 24 сехет хушшинче Япони авиацийĕ Голланди Индийĕн хăшпĕр пунктĕнче кăна хăйĕн пысăк мар активлăхне палăртнă. Самаринд хули çине темиçе бомба пăрахнă. Çав хула çинех пулеметсенчен те пенĕ. Мĕнпурĕ икĕ çынна вĕлернĕ, виçĕ çынна амантнă. Материальнăй сиен пысăк мар.

Голланди Индийĕн авиацийĕ Япони суднисем пĕр çĕре пухăнса тăнине курса, çав суднăсем çине бомбăсем пăрахнă. 12 бомба 4 карап çине тĕл пырса ӳкнĕ. Самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 23-мĕшĕнче Япони войскисем Çĕнĕ Британи утравĕ çине, Каеик районĕнчи Бару—Нью—Иланд хули çывăхĕнче десант антарнă.

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ ячĕпе пулнă йышăну

ЛОНДОН, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Лондонра Совет посольстви Совет профсоюзĕсен Англие пынă делегацийĕ ячĕпе йышăну туса иртternĕ. Йышăнура 300 хăна пулнă. Йышăнăва пынă хăнасем хушшинче экономикăллă вăрçă министрĕ Дальтон, портфельсăр министр Гринвуд, Англи тред-юнионĕсен конгресĕн генеральнăй секретарĕ Ситрин, лейбористсен партин исполком секретарĕ Миддльтон, чугунçул çинче ĕçлекенсен тред-юнионĕн генеральнăй секретарĕ Мартбэнк, строительнăй ĕçсен министерствин парламентри секретарĕ Сикст тата сăрт-ту промышленность департаменчĕн руководителĕ Греншау пулнă.

Гитлер хаçачĕсем суйса пăтранса кайнă

СТОКГОЛЬМ, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Нимĕç хаçачĕсем Германипе Совет Союзĕ хушшинчи вăрçă фронтĕнчен пĕлтерсе тăракан хыпарсем халĕ пĕрре те пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕ мар, пĕр хыпарĕ тепĕр хыпарне пĕтĕмпех хирĕçлет. Час-часах çакăн пек пулса тухать: Гитлерăн пĕр хаçачĕ хăйĕн тепĕр хаçачĕ çырнинех хирĕçлесе çырать. Çапла, «Берлинер берзенцейтунг» хаçат çакăн пек çырнăччĕ: «Хĕвелтухăçĕнчи оборона фронтĕнче нимĕç войскисем тасатса хăваракан участоксенче вырăссем вăрахăн куçса пыраççĕ», тенĕ. «Берлинер берзенцейтунг» хаçат çапла çырни Геббельс инструкцине пăхăнса çырниччен килнĕ. Геббельс инструкцийĕ тăрăх, Германи войскисем Германипе Совет Союзĕ хушшинчи вăрçă фронтĕнче тӳсекен пур поражениçене те нимĕçсен савăлĕсене план тăрăх каялла куçарнă пек туса çырмалла. «Берлинер берзенцейтунг» хаçат «нимĕç войскисем тасатса хăваракан участоксем» тесе çырать пулсан, «Франкфуртер цейтунг» хаçат Хĕрлĕ Çар çав нимĕç войскисем «тасатса хăваракан» районсене йышăнса пыни çинчен пĕр сăмах та шарламасть. Вăл, пачах урăхла, çапла çырать: нимĕçсем «халăх пурăнакан пĕр пункта та Германи салтакĕсен юлашки вăйĕ пĕтиччен çапăçмасăр вырăссене памаççĕ» тет. Çапла ĕнтĕ, Геббельс пропагандисчĕсем пачах пăтранса кайнă.

Советпа Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчен килекен хыпарсем кунран кун салхуланса пыраççĕ, шухăшпа яраççĕ. «Гамбургер фремденблат» нимĕçсене йывăр пурнăç умне çитсе тăнăшăн хуйха ӳкме хушмасть. Вăл çапла çырать: «Кам пуçа усса шухăша каять, вăл вара чиперрĕн тăрса юлас шанчăка та çухататъ», тет.

Нимĕçсем Норвегире хăйсен çарне вĕтĕ-шакăрсене илеççĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсем Норвегире хăйсен çарне тата «Норвеги легионĕ» текен отрядсене чĕркелеме çынсем пуçтарас тĕлĕшпе кампани пуçласа янă. Ку кампанире нимĕçсем вĕтĕ-шакăрсене астарса çарсене кайма çырăнтарасшăн. Норвегин телеграф бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Квислингăн юстици «министрĕ» приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх, çул çитмен çамрăксене ашшĕ-амăшĕсенчен ыйтмасăрах «Норвеги легионне» тата нимĕçсен çарне çырăнма ирĕк панă. Халĕ палăртнă тăрăх, квислинговецсем вĕтĕ-шакăрсене эрех ĕçтерсе ӳсĕртеççĕ те çара кайма çырăнсан тем чухлĕ укçа пама пулаççĕ.

Гитлеровецсем Норвегире çĕнĕ заложниксем илеççĕ

НЬЮ-ИОРК, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи влаçĕсем Норвегире Норвеги королĕн Хоконăн тусĕсене т. ыт. паллă деятельсене арестленĕ, вăл шутра консерваторсен партин руководителĕ Андерсен та пур. Германи влаçĕсем вĕсене пурне те заложниксем тесе шутлаççĕ.

Германире тата вăл оккупациленĕ çĕршывсенче чир-чĕрсем вăйлăн сарăлаççĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Шведсен «Националь тюбинг» ятлă хаçачĕ нимĕçсен сывлăх ĕçне ертсе пыракан руководителĕ Конти тунă заявление пичетлесе кăларнă. Конти заявленийĕ тăрăх, нимĕçсем оккупациленĕ Европăри çĕршывсенче туберкулезпа, кĕçĕпе, дифтерипе тата шатраллă тифпа чирлекенсен шучĕ чылаях ӳссе кайнă. Конти тата çакна та ирĕксĕрех йышăннă: Германи çĕршывĕнче хăйĕнче те шатраллă тифпа нумай чирлеççĕ, çавăн пирки ĕнтĕ Германире халĕ пыйтăсене пĕтермелли кампани пуçласа янă. Конти тата çакна кăтартса панă: Германире цынга чирĕ пит анлăн сарăлса кайнă. Германире халăх вилесси юлашки вăхăтра ӳснĕ.

Румынипе Венгри хушшинчи хирĕçӳсем

СТОКГОЛЬМ, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). «Афтенбладет» хаçатăн Будапештран килнĕ корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Румынипе Венгри хушшинчи хирĕçӳллĕ ĕç халĕ те хăй çивĕчлĕхне çухатман-ха. Нумайĕшĕсем Румынипе Венгри хушшинче хĕçпăшаллă тытăçу пуçланса каятех тесе шутлаççĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче çапăçакан румынсен чаçĕсемпе венгерецсен чаçĕсем хушшинче хĕçпăшаллă тытăçусем те пулнă.

Венгри штабĕн пичет пайĕн начальникĕ çакна çирĕплетсе каланă: пĕрре хинче румынсемпе венгерецсем хушшинче пĕр-пĕрин çине артиллерирен пенĕ чăнахах та пулнă, тенĕ. Румынсем венгерецсен дипломатиллĕ почтине час-часах конфискацилеççĕ, е венгерецсем румынсен почтине конфискацилеççĕ. Халĕ румынсен дипломатиллĕ почти Германие Венгри урлă каймасть, таврă çулпа çӳрет.

Çак хирĕçӳсене пула та венгерецсем хăйсен çарне Венгрирех тытса тăрасшăн, Совет Союзне хирĕç вăрçма ярасшăн мар. Кунсăр пуçне тата Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçă Венгри халăхне пĕрре те кăмăла каймасть. Совет войскисем çинчен калаçнă чух венгерецсем вĕсене пысăк чыса хурса калаçаççĕ. Вĕсем çапла калаççĕ: «Вырăс çарĕсен командованийĕ ĕçе пит те лайăх пĕлет, вырăс çарĕсен хĕçпăшалĕ пит те чаплă. Вырăссен çар материалĕсем хисепсĕр нумай. Совет салтакĕсем пек хăюллă та паттăр салтаксем текех çук та, вĕсем вилĕмрен пĕртте хăрамаççĕ».

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕН КИЛНĔ ЮЛАШКИ ХЫПАРСЕМ

Психикăллă атака путланса ларнă

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ. Стратеги тĕлĕшпе питĕ кирлĕ вырăн йышăнса тăракан Б. ялĕшĕн пынă çапăçура нимĕçсем пирĕн боецсене хирĕç психикăллă атака пуçласа янă. Усĕр фашистсен йышкĕтĕвĕ темиçе рет тăрса пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе утса пирĕн боецсен пысăк мар ушкăнĕ çинелле килнĕ. Наводчик Морозов хăйĕн орудийĕ патĕнче тимлĕн хатĕрленсе тăнă. Нимĕçсем çывхарса çитсе пуçласан, Морозов нимĕçсем çине пеме пуçланă. Вăл пенĕ малтанхи снаряд тӳрех нимĕçсен малти речĕ çине чи варрине пырса ӳкнĕ. Морозов вĕçĕмех тĕл персе тăнă. Нимĕçсем çавна чăтса тăраймасăр каялла тарма тытăннă. Психикăллă атака туса килнĕ çул пĕтĕмĕшпех нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен виллисемпе витĕннĕ. Фашистсен çавăнта 400 çын ытла вилсе юлнă. Наводчик Морозов хăйĕн тивĕçне отлично пурнăçланă. (ТАСС).

Партизансен отвечĕ

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Донбасри шахтерсен поселокĕсенчен пĕринче итальянецсен гарнизонĕ тăнă. Партизансем пырса çапассинчен хăраса, Итали вояккисем çакăн пек пĕлтерӳ кăларса çапнă: «Кам партизансем ăçта тăнине кăтартса парать, çавна награда паратпăр», тенĕ.

Гитлерла хăравçă-вояккăсен пĕлтерĕвĕ çине партизансем хăйсемех ответленĕ. Вĕсем поселока çавăрса илнĕ те автоматсенчен персе тата гранатăсем ывăтса, Итали салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн вут тавра тавра яна машинисем тĕттĕмре çĕрĕпех йалкăшса сунна. Итальянецсен пĕлтерĕвĕ çумне çакăн пек асăрхаттарса çырса хăварнă: «Ан чăрманăр. Совет партизанĕсем ăçта тăнине эпир хамăрăн пульăсемпе тата гранатăсемпе пĕлтерĕпĕр».

Ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке ĕç тухăçне ӳстерме пулăшрĕ

ШАМАРША. Ĕçшĕн хушса тӳлемелли закона йышăннăранпа 11 уйăх иртрĕ ситĕ. Çак историллĕ постановлени общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе калама çук пысăк пулăшу пачĕ. Нумай колхозниксемпе колхозницăсем халĕ хăйсен ĕçне çавтери юратса тăваççĕ.

Пуянкассинчи «Заря» колхозри свинарка М. Егорова иртнĕ 1941 çулта сысна çурисене пăхса ӳстерес плана ытлашшипех тултарчĕ. Уншăн ăна ĕçкунĕсем çумне хушса 2 сысна çури пачĕç. Палтиелĕнчи «Красная звезда» колхозăн фермине ĕçлекен П. Федорова пăрусене пурне те лайăх пăхса ӳстерчĕ. Планпа пăрусен чĕрĕ виçине кашни талăкра 475 грамм хушăнтарса пыма палăртнăччĕ. Федорова юлташ пăхакан пăрусем малтанхи 6 уйăх хушшинче талăксерен 850-шар грамм хутшăнса пычĕç. Çак пахха ĕçшĕн вăл хушса тӳлемелли йĕркепе 165 литр сĕт тата 65 килограмм аш-какай илме тивĕçлĕ пулчĕ.

«Триер» колхозра сурăхсен фермине ĕçлекен Д. Журавлева хăй пăхакан сурăхсенчен çăм илмелли плана ытлашшипех тултарнăшăн 10 килограмм çăм, 3 сурăх тирĕ илчĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозра сурăхсем пăхакан Угасина колхозницăна та çав ĕçшĕнех 11 килограмм çăм пачĕç. Чапаев ячĕпе тăракан колхозри доярка М. Салтниковa хăйне çирĕплетсе панă ĕнесенчен сĕт суса илес плана ытлашшипех тултарнă. Кашни ĕнерен çулталăкра 1700 литр сĕт илмелле. Çак нормăна вăл тахçанах тултарнă, хăй çумне çирĕплетнĕ ĕнесенчен планран иртterse 2900 литр сĕт суса илнĕ. Çакăншăн ăна ĕçкунĕсем çумне хушса 540 литр сĕт параççĕ. Кун пек тĕслĕхсем районра татах та нумай.

Фермăсенче ĕçлекенсем халь выльăхсене ăшă та тутă хĕл каçарса, 1942 çулта татах та ытларах продукци илессишĕн, фашистла захватчиксене вăйлăран та вăйлăрах çапса аркатса пыракан Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот боецĕсем валли аш-какай, сĕт-çу тата промышленность валли чĕртаварсем темиçе хут ытларах парассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ф. КРАСНОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЛАША çухалнă,

ячĕ—„Шкалик", тĕсĕ—тĕксĕм хăла, çамки çинче—çăлтăр. Куракансене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чăваш АССР, Ишлей районĕ, Анат Кĕнер ялсоветĕ, „Прожектор" колхоз правленийĕ.

Открыт прием подписки на журналы

на 1942 год (без лимитов)

№№ по порядку	НАИМЕНОВАНИЕ ИЗДАНИЙ	ПОДПИСНАЯ ЦЕНА 1 мес.	3 мес.	6 мес.	12 мес.
1.	Акты физика-химика (на англ., немецком и французском яз.)	—	27—	54—	108—
2.	Биохимия	—	—	24—	48—
3.	Ботанический журнал	—	—	18—	36—
4.	Водоснабжение и сантехника	—	10—50	21—	42—
5.	Внешняя торговля	2—25	6—75	13—50	27—
6.	Вожатый	—	3—90	7—80	15—60
7.	Дружные ребята	—	3—	6—	12—
8.	Доклады Всесоюзной академии сельхознаук им. Ленина	—	12—	24—	48—
9.	Журнал прикладной химии	—	24—	48—	96—
10.	Журнал экспериментальной и теоретической физики	—	24—	48—	96—
11.	Журнал общей биологии	—	—	24—	48—
12.	Журнал физической химии	—	27—	54—	108—
13.	Журнал общей химии	—	—	36—	72—
14.	Журнал технической физики	—	—	36—	72—
15.	Журнал «Оф физикс» (на англ., французском и нем. языках)	—	18—	36—	72—
16.	Записки Всероссийского минералогического общества	—	—	18—	36—
17.	Зоологический журнал	—	—	24—	48—
18.	Известия Академии наук СССР:				
	а) серия биологическая	—	—	27—	54—
	б) серия географическая и геофизическая	—	—	24—	48—
	в) серия геологическая	—	—	24—	48—
	г) серия математическая	—	—	18—	36—
	д) серия физическая	—	—	24—	48—
19.	Известия Академии Наук СССР, отделения технических наук	—	—	48—	96—
20.	Известия Государственного географического общества	—	—	24—	48—
21.	Известия Академии Наук СССР, отделения химических наук	—	—	24—	48—
22.	Интернациональный маяк	—75	2—25	4—50	9—
23.	Легкая промышленность	—	15—	30—	60—
24.	Лесная промышленность	—	15—	30—	60—
25.	МТС (машинно-тракторная станция)	—	3—	6—	12—
26.	Математический сборник (издание Академии Наук СССР)	—	—	27—	54—
27.	Микробиология	—	—	40—	80—
28.	Морской флот	—	9—	18—	36—
29.	Нефтяная промышленность СССР	—	12—	24—	48—
30.	Почвоведение	—	20—	40—	80—
31.	Природа	—	9—	18—	36—
32.	Прикладная математика и механика	—	—	24—	48—
33.	Речной транспорт	3—50	10—50	21—	42—
34.	Советская ботаника	—	—	24—	48—
35.	Текстильная промышленность	—	15—	30—	60—

Подписка принимается до 7-го февраля исполнением с января месяца.

«СОЮЗПЕЧАТЬ».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23 «Ленин сулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 354 Типография №1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2, Ф 6. 58 84 п. л.